Артемьев Ю.М. К.В. Иванов (1890-1915) : [поэтăн творчествине тишкерни] / Ю. М. Артемьев // XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури (1900-1917 çç.) / Ю. Артемьев. – Шупашкар, 1992. – С. 59-89.

# К. В. ИВАНОВ

(1890—1915)

Чăн-чăн поэзи тӳпине çĕкленнĕ поэтăн К. В. Ивановăн пултарулăхĕ чăваш халăх культуринче тивĕçлипех паллă вырăн йышăнать. Патша саманинче çуралса ӳснĕ поэта университетра е урăх аслă шкулта пĕлӳ илме тӳр килмен пулсан та, вăл ытларах хăй тĕллĕн вĕренсе çав вăхăтри пысăк культурăллă, чи малта пыракан çынсен шайне çити хăпарма пултарнă. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăратнине пула ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве çĕкленнĕ чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕн сасси-хавалĕ урлă

вăл хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр хевтипе пултарулăхне хăюллăн палăртнă. «Нарспи» поэма вара ĕмĕрсем тăршшĕпех пусмăрта пуăннă, патша саманине питлекен чăваш халăхĕн сасси пулнă. Çак поэмăра К. В. Иванов тăван халăхăн таса сĕткенлĕ те тулли тĕшĕллĕ сăмахлăхне юратса тĕпчени те, чăвашсен çыруллă литературине лайăх пĕлни те, вырăс литературин паха тĕслĕхĕсене ăша хывни те уççăнах курăнать. «Нарспи» поэмăн янравлă та витĕмлĕ чĕлхи чăваш сăмахлăхĕ пысăк малашлăхлă пулнине, вăл вĕçĕ-хĕррисĕр пуяннине тата çав пуянлăха тĕнче умне кăларма кирлине çирĕппĕн ĕнентернĕ. Поэмăри халăх хуйхипе савăнăçне туллин кăтартакан чĕрĕ сăнарсем чăвашсен илемлĕ литератури реализм çулĕпе аталаннине çирĕплетсе панă.

Константин Васильевич Иванов 1890 çулхи çу уйăхĕн 15(27)-мĕшĕнче Ĕпхӳ кĕпĕрнин Пелепей уесĕнчи (Пушкăртстан Республикин Пелепей районĕ) Слакпуç ялĕнче çуралнă. Пулас поэтăн несĕлĕсем кунта Атăл тăрăхĕнчи чăваш çĕрĕнчен куçса килнĕ пулнă. Кĕçтенттин ашшĕ-амăшĕ тĕреклĕ пурнăçпа пурăннă. Ашшĕ вара, хăй те хутла пĕлнĕскер, уйрăмах ывăлне вĕрентсе кăларса хисеплĕ çынсен шутне кĕртме ĕмĕтленнĕ.

1898 çулта Кĕçтенттин тăван Слакпуçĕнчи пуçламăш шкула çӳреме пуçлать. 1902 çулта ăна мухтав хучĕпе пĕтернĕ хыççăн Чĕмпĕрте никама та вĕренме илмен пирки Пелепейри хула училищине кайса вырнаçать. Çакăнта пĕр çул вĕренсен, 1903 çулта Кĕçтенттинăн учительсене хатĕрлекен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи вĕренме хатĕрлекен класа вырнаçма май килет. Шăпах çакăнта пулнă та ĕнтĕ пулас поэтăн «лицейĕпе университечĕ».

1868 çулта И. Я. Яковлев уçнă шкул революцичченхи чăваш культурин аслă вучахĕ шутланнă. Çак шкулта вĕренекенсен тарăн пĕлӳ илсе ăс-тăн тĕлĕшĕнчен аталанма пур майсем те çителĕклĕ пулнă. Шкулта нумай енлĕ те тарăн пĕлӳ илнисĕр пуçне, вĕренекенсене ӳкерӳпе юрă-кĕвĕ, тĕрĕ-эрешпе ал ăсталăхне вĕрентнĕ тата ытти ĕçе хăнăхтарнă. Тапса тăракан пултарулăхне çутçанталăкранах туяннă пĕчĕк Кĕçтенттин, çакăнта çитĕннĕ май çунатне сарса, поэзи тӳпине вĕçсе хăпармашкăн хавхалануллă вăй пухма пикеннĕ.

Хатĕрлекен класра икĕ çул вĕреннĕ хыççăн 1905 çулхи кĕркунне Кĕçтенттина пĕрремĕш класа куçараççĕ. Пултаруллă та тăрăшса вĕренекен ачана часах И. Я. Яковлев та асăрхать. Паллă педагог пулăшса пыни, вăл пулас поэтăн ӳсĕмне сăнасах тăни К. Ивановăн пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать. Çиелтен пăхма йăваш та сăпайлă вĕренекенре сăвăç чĕри тапнине те çийĕнчех туйса илнĕ пулмалла И. Я. Яковлев. Каярахпа вăл К. Иванов çинчен çапла аса илет: «Вырăс чĕлхине питĕ лайăх пĕлетчĕ, йывăр пулин те, часах вĕренчĕ. Эпĕ унпа чылай ĕçлерĕм. Сăмахран, Лермонтов поэзийĕн вăрттăнлăхне уçма пулăшас тĕллевпе ăна Белинский ĕçĕсемпе паллаштарнăччĕ»[16]. И. Я. Яковлев поэта тăван чĕлхепе халăх сăмахлăхне тĕпчеме кирлине

аступарсах тăнă, чăн-чăн илеме тарăнрах ăнкарма хавхалантарнă.

Пысăк поэт çурални — вăл яланах асамлă вăрттăнлăх. К. Ивановпа куллен кунах пĕрле вĕреннĕ, юнашарах пурăннă тата Сĕве хĕрринче выляна сывăх юлташĕсем те татса калаймаççĕ: хăçан тата мĕнле майпа пулса тăма пултарнă-ха сăпайлă та вăтанчăкрах ачаран вилĕмсĕр поэма çырма мехел çитернĕ поэт? Акă мĕн калать поэта çывăх пĕлнĕ И. Т. Трофимов: «Константин Васильевич çав вăхăтрах (1907 çулта) Лермонтов сăввисене куçарнă, хăйĕн оригиналлă произведенийĕсене те çырнă; çĕрле, юлташĕсем çывăрнă вăхăтра çырнă, хăйĕн шухăшĕсем çинчен никама та шарламан. Çавăнпа эпир вăл «Нарспи» поэмине çырнине те сисмен. Çĕрле вăл учителе тухма экзамена хатĕрленет пулĕ тесе шутлаттăмăр»[17]. И. Я. Яковлев мăшăрĕ Екатерина Алексеевна Алексей ывăлĕн арăмĕ патне çырнă çырура кун пирки тата тĕлĕнмеллерех хыпар пĕлтерет: «Пирĕн шкулта тĕлĕнмелле чаплă поэт палăрчĕ. Пĕлтĕр пĕрремĕш класран кăларса янисенчен пĕри — Константин Иванов — вăлах художник. Пĕррехинче Иван Яковлевич унăн çывăрмалли пӳлĕмне кĕнĕ, вăл темскер вуласа ларнă хушăра Иван Яковлевич кĕнине асăрхаман та. Унтан вăл кĕнине сиссе хăранипе шартах сикнĕ те тетрадьне пытарнă, кайран вара хăех кăтартнă. Ку чăвашла çырнă легенда пулнă иккен, пурĕ икĕ пин ытла сăвăланă йĕрке. Чăн-чăн чăваш чĕлхипе, пулса çитнĕ рифмăсемпе çырнăран папа калама çук хĕпĕртерĕ. Мĕнле те пулин пичетлетĕпех, тет»[18].

1907 çултах, е вунçичĕ çулта чухнех, çырса пĕтернĕ пулнă иккен поэт «Нарспи» поэмине. Анчах мĕн чухлĕ вăхăт ĕçлемелле, вăй хывмалла пулнă-ха çав тĕлĕнмелле поэмăна ăсталама. Паллах, хатĕрленӳ тапхăрĕнчи ĕç вăл — кĕретĕнех куçа курăнса тăракан ĕç мар. Мĕн пĕчĕкренех пурнăçа художникла сăнаса вĕренсе ӳснĕ пулас поэт. «Нарспи» поэмăри ытараймил илемлĕ тавралăха, йывăр хуйха маннă самантсенче савăнăçпа çиçекен чăваш çыннисене поэт чи малтанах Слакпуçĕнче курнă, вĕсене лайăх пĕлнĕ. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренме пуçласан вара К. Ивановăн хăй вăйне тĕрĕслесе пăхма меллĕ условисем те тупăнаççĕ. Кунта вĕренме пуçланă вăхăтрах унра художник чĕри вăраннă пулнă ĕнтĕ, анчах хăйĕнчен хăй нумай ыйтаканскер, вăл сассине ĕнерет-ха, хăй çинчен пĕлтерме васкамасть. Тинкерлĕ куçпа улталами хăлха кирлĕ-çке-ха художника.

К. Иванова çутçанталăк поэт чунĕ çеç мар пӳрнĕ пулнă иккен. Валакран шăнкăртатакан çăлкуç юххипе тăри юррине, çурхи хĕвелĕн куçа йăмăхтарса çунакан тĕсĕпе çаран çинчи путек сиккине сăмахпах куçа курăнмалла ӳкерсе пама вăй çитерекен сăвăç çак япаласене пир çине тĕрлĕ сăрпа ӳкерсе те чĕртме пултарнă. Ку вăл — К. Иванов таланчĕн тепĕр енĕ. Çак ăсталăха алла илме поэта Чĕмпĕр шкулĕн художникĕ Н. Ф. Некрасов пулăшнă. Циркри клоуна аса илтерекен çак художник,

ытла та ахаль çынла курăнаканскер, К. Ивановра хайпе пер кĕвĕллĕ тăванла чун курнă пулас. Поэт хатĕрлекен класра вĕреннĕ вăхăтрах художник мастерскойне çӳреме пуçлать. «Иванов мастерскойне час-часах пыратчĕ; вăл куçĕсене хĕссе нимĕн чĕнмесĕр пĕр-пĕр картина çине пăхса тăни халĕ те ман куç уменчех. Мастерскойне çӳрекен ачана Некрасов асăрхаса илнĕ, унпа калаçкаласа, вăл ăçталла туртăннине сиссе, ăна кăтартусем пама тытăннă. Пыра киле художник мастерскойĕнче Иванов картинисем те курăнма пуçларĕç. Вĕсене япаласем чĕркемелли хут çине кăмрăкпа ӳкернĕччĕ» [19]. Паллă ĕнтĕ, художество академине вĕренме кĕрсе, тĕнчипе паллă художник пулма тӳр килменшĕн К. Иванов хăй пĕртте айăплă мар. Ку вăл — патша саманинчи пиншер талантăн трагедилле шăпи.

К. Ивановăн шкулта вĕреннĕ чухнех палăрнă таланчĕ чăннипех те темиçе çынна çитмелле нумай енлĕ пулнă. Тепĕр тĕслĕх. Поэта аса илекенсенчен нумайăшĕ вăл хăлха енчен çивĕчех пулманнине палăртаççĕ. Кун пирки К. А. Апанасов та çаплах калать: «Пĕчĕкçĕ çамрăк Иванов хăлха енчен хытăрахчĕ, хуллен каланине илтместчĕ, анчах музыкăна ытла хытă юрататчĕ. Пирĕн шкулти ачасен хорĕ юрланине итленĕ чух епле хумхануллă пит-куçлă пăхкаласа тăнине астăватăп. Вăл кайран, çитĕнсе çитсен, купăс калама пит ăста пулнă тенине эпĕ Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ çынсенчен илтнĕччĕ» [20]. К. Иванов сĕрме купăс калама пултарни те паллă.

Çутçанталăк нумай парать пулсан, нумай ыйтать. Вĕресе тăракан пултарулăха татса кайнă пĕве пек ирĕккĕн кĕрлесе тапса тухма майсем шырамалла. Пĕлӳ илме, шалти культурине ӳстерме ăнтăлакан çамрăк вĕренекен шкул программине вĕреннипе çеç çырлахма пултараймасть. Вăл çине тăрсах тĕнче культурин пуянлăхне тĕпчеме пуçлать. Вырăс тата ют çĕршыв литературисен классикĕсем А. С. Пушкин, Н. В. Гоголь, М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Н. А. Некрасов, В. Г. Белинский, Л. Н. Толстой, А. М. Горький, В. Шекспир, И. В. Гете, Г. Гейне т. ыт. те К. Ивановăн юратнă вĕрентекенĕсем пулса тăраççĕ.

Тĕнче тытăмĕн тĕп ыйтăвĕсене хăюллăн хускатакан, этем тивĕçĕпе ăс-тăнне мухтакан тата ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве çĕкленме хавхалантаракан вырăс литературин паха тĕслĕхĕсемпе паллашни чăваш халăхĕн иртнипе пуласлăхĕ, унăн культури пирки шухăшлаттарать. Поэт тăван халăха çутта кăларас ĕçре хăй тивĕçĕ те пысăккине ир туйса илет.

1906 çулта К. Иванов илемлĕ çырулăх ĕçне пуçăнать. Ку вăхăтра М. Федоровăн «Арçури» балладипе те, Г. Т. Тимофеевăн «Тăхăръялĕ» те, шкулта алçыру халлĕн упраннăскерсем, пичетленмен пулнă-ха. К. Иванов вĕсемпе тĕплĕн паллашнă хыççăн тăван халăх хевтипе чĕлхин малашлăхне иксĕлми шанчăкпа ĕненме пуçлать. Çакăнпа пĕрлех çырас ĕмĕтпе хавхаланнă поэт халăх сăмахлăхĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухма кирлине тарăнрах ăнланса илет. 1906 çулхи кĕркунне К. Ива-

нов хӑй йӑх пуҫӗсен тымарне тӗпчесе, «Икӗ ӑру» ятлӑ пӗрлештернӗ калавсен ярӑмне ҫырма план тӑвать. Ҫав вӑхӑтра вӑл хӑй ҫуралса ӳснӗ Слакпуҫпе юнашар ялсенче халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсене пухать. Тен, ҫакӑнтах поэт Нарспипе Сетнерӗн телейсӗр юратӑвне аса илтерекен юмах-сӑмах та сахал мар илтнӗ: тепӗр ҫултан «Нарспие» ҫырса пӗтерет-ҫке-ха вӑл.

Ҫырулӑх ӑсталӑхне алла илме, чӗлхе хӑвачӗпе техӗмне туйса илме К. Иванова вырӑс писателӗсен произведенийӗсене вулани тата вӗсене чӑвашла куҫарни те нумай пулӑшнӑ. Сӑмахран, чи малтан ҫамрӑк сӑвӑҫ М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Н. А. Некрасов сӑввисене куҫарать. Уйрӑмах поэт чун-хавалӗ М. Ю. Лермонтовӑн пӑлхавлӑ чунсемпе тулнӑ хӑйне уйрӑм асамлӑ тӗнчи патнелле туртӑнать. Куҫару ӗҫӗ поэта хӑй чӗлхине туптама май парать, вӑйлӑ характерсемпе курӑмлӑ портретсем ӳкерес ӑсталӑха туптама пулӑшать.

1905—1907 ҫулсенче революци хумӗсем Чӗмпӗрти чӑваш шкулне те тӑвӑллӑн ҫитсе хускатаҫҫӗ. Революцилле шухӑшсемпе хавхаланнӑ ҫамрӑксем шкулти йӗркесене сивлесе пӑлханаҫҫӗ. Юлташсен кӑмӑлӗпе пӗр пулса, К. Иванов та ҫав пӑлхава хутшӑнать. Поэт, революци ҫулӗсенче анлӑ сарӑлнӑ «Марсельезӑн» пӗр вариантне ирӗккӗн куҫарса, «Вӑранӑр, тапранӑр!» текен чӑвашла юрӑ хайлать. Ку ӗнтӗ тӳреммӗнех кӗрешӗве йыхӑракан юрӑ пулнӑ:

> Вӑранӑр, тапранӑр, чӑваш ҫыннисем!
> Тапран эс вӑрҫма, выҫӑ халӑх!
> Халах хӑй ҫиллине кӑтӑртӑр!
> Малалла, малалла, малалла!

Шкул программине ҫӗнетсе анлатас туртӑмпа ытти хӑшпӗр вак-тӗвек ыйтусенчен пуҫланнӑ хумханусем политикӑлла забастовка шайнех ҫӗкленеҫҫӗ. 1907 ҫулхи пушӑн 7-мӗшӗнче Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн пӗрремӗш класӗнче вӗренекенсем забастовка тӑваҫҫӗ. Вӗренекенсем шкулта вӗрентекен хӑшпӗр шовинистла кӑмӑл-туйӑмлӑ учительсене, сӑмахран, Д. И. Кочурова, ӗҫрен хӑтарма ыйтаҫҫӗ. Забастовка йӗркелекен тата ӑна ертсе пыракансем шутне К. Иванов та кӗнӗ пулнӑ.

Шкулта веренекенсем пӑлханни Хусанти вӗренӳ округӗнчеҫлекен чиновниксемшӗн пӗрремӗш класа пӗтӗмпех хупса лартма ытла та меллӗ сӑлтав пулнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн пӗрремӗш класра веренекен 37 ачапа пӗрле К. Иванова шкултан кӑларса яраҫҫӗ. Поэт кӗркуннеччен Слакпуҫӗнче ашшӗ килӗнчех пурӑнать. Авӑн уйӑхӗнче вӑл Благовещенск хулинчи семинарие кӗме экзаменсем парать, анчах та турӑ законӗпе экзамен ӑнӑҫсӑр тытнӑран ана вӗренме илмеҫҫӗ. Поэт пурнӑҫӗн ҫак тапхӑрне чӑваш литератури историйӗнче ку таранччен те тивӗҫлӗ ҫутатса парайман-ха: фактсемпе документсем ҫителӗксӗртерех пулнӑ. 1907 ҫулхи кӗркунне поэт пултарулӑхӗнче чи хӗрӳ те тухӑҫлӑ тапхӑр пулнӑ, мӗншӗн тесен поэт шӑпах ҫак кӗркунне, нумай-нумай

ытти ĕç тунипе пĕрлех, «Нарспи» поэмăна çырнă. Çав çулхи кĕркунне И. Я. Яковлев чĕннипе Чĕмпĕр шкулне каялла таврăнсан та, поэт ырми-канми ĕçленĕ. Илемлĕ литературăпа педагогика кĕнекисемпе пĕрлех поэт тĕн литературине те ăнăçлă куçарать.

Паллă ĕнтĕ, тĕн кĕнекисене куçарасси поэтшăн чун туртакан ĕç пулман. Çав хушăрах К. Иванов Л. Н. Толстойăн «Кавказра тыткăнра пурăнни», С. Т. Аксаковăн «Кĕрен чечек» произведенийĕсене, Андерсенăн «Акăшсем» юмахне юратса, пысăк хавхаланупа куçарать. Кунпа пĕрлех поэт çĕнĕ произведенисем çырма вăхăт тупать. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: «Икĕ хĕр» (1907), «Тăлăх арăм» (1907); «Тимĕр тылă» (1907), «Выçă аптранăскерсем» (1907), «Нарспи» (1907—1908), «Шуйттан чури» трагеди сыпăкĕсем (1907). Кунсăр пуçне, поэт М. Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине», «Тĕрме сыннине», «Хумсемпе сынсем», «Парăс», «Пурăнăç курки», «Тусен тăррисем», «Чул ту» тата ытти произведенисене те куçарать.

Çав вăхăтрах поэт «Первая книга для чтения после букваря на чувашском языке» текен кĕнекене пухса хатĕрлес енĕпе ĕçлет тата шкул архивĕнчи вак-тĕвек ĕçсене туса пырать.

1908 çулхи кĕркунне И. Я. Яковлев нумай вăй хунипе поэтăн уйрăм произведенийĕсем пичетленсе тухаççĕ. «Сказки и предания чуваш» ятлă кĕнекинче К. Ивановăн çакăн пек оригиналлă произведенийĕсем çапăнаççĕ: «Нарспи» поэма, «Икĕ хĕр» ятлă сăвăлла юмах, «Тăлăх арăм» тата «Тимĕр тылă» балладăсем, М. Лермонтовăн чăвашла куçарнă хăш-пĕр хайлавĕсем уйрăм кĕнекен пичетленсе тухаççĕ («Калашник хуçа çинчен хунă юрă», сăвăсем). Чĕмпĕр шкулне уçнăранпа 40 çул тултарнă тĕле тата И. Я. Яковлев 60 çул тултарнине чысласа К. Иванов «Хальхи самана» сăвă (1908) çырать. Поэт чăваш халăхне çутта кăларакан И. Я. Яковлевăн улăпла ĕçне пысăка хурса хаклать.

Чĕмпĕр шкулĕнчен кăларса янă хыççăн К. Иванов малалла вĕренесси пирки пĕр самант та шухăшлама пăрахмасть. Анчах та ăçта вĕренме май пур? Поэт хăй тĕллĕн нумай вĕренет, пĕтĕмĕшле культура шайне ӳстерме тăрăшать. 1909 çулхи апрель уйăхĕнче, Чĕмпĕрти арçынсен гимназийĕнче экзаменсене экстерн йĕркипе тытса, К. Иванов икĕ класлă училищĕсенчи вĕрентекенĕн ятне илет. Паллах, поэт пурнăçĕнче малашлăха çул уçакан çак пысăк ĕç ăна хавхалану кӳрсе шанчăк парать. К. Иванов кăштах сывлăхне çирĕплетес тĕллевпе тата çĕр ĕçченĕн хуйхи-суйхине тарăнрах ăнланса илес тесе, Самар кĕпĕрнинчи çĕр виçевĕнче ĕçлекен тусĕ Н. Ф. Беляев патне тухса каять. Ку вăл, нумаях пулмасть Чĕмпĕр шкулĕнчен пăрахса тухса кайнăскер, революци майлă шухăшлакан этем пулнă. Çакăн пек мал ĕмĕтлĕ çынпа чылай вăхăт хушши çывăх пурăнни поэта Раççейри политикăлла лару-тăрăва тарăнрах ăнкарса илме пулăшнă.

1909 çулхи кĕркунне К. Иванов каялла Чĕмпĕрти чăваш

шкулне тавранать. Кунта вăл малтанхи вăхăтра куçару ĕçĕпе, кĕнеке кăларас тĕлĕшпе тăрмашать. Каярахпа К. Иванов учительсен шкулĕ çумĕнчи хĕрарăмсен икĕ класлă училищинче черченипе рисование тата чистописание вĕрентет. Çак ĕçре вăл 1914 çулхи ноябрь уйăхĕчченех тăрăшать.

К. Иванов *хăй пурнăçĕпе пултарулăхĕн юлашки тапхăрĕнче* илемлĕ произведенисем сахал çырнă. Ку, пĕр енчен, çырнă япаласене пичетлеме май çуккинчен килнĕ. Тепĕр енчен, ытларах куçару ĕçĕпе тата букварь илемлетес тĕлĕшпе тăрмашнăран поэтăн ытти ĕçсем валли вăхăт юлман.

1913 çулхи кĕркунне К. Иванов йывăр чирлесе ӳкет. Кăшт сывалнă хыççăн тепĕр çултанах поэт тата йывăртарах чирлесе ӳкет те 1914 çулхи чӳк уйăхĕнче ашшĕ-амăшĕ патне, тăван ялне таврăнать. Ӳпке чирĕпе пĕрлех, поэт вар чирĕпе те аптраса çитет. 1915 çулхи пушăн 13(26)-мĕшĕнче «Нарспи» авторĕ çĕре кĕрет.

К. Иванов илемлĕ çырулăх ĕçне пуçăнни вырăссен пĕрремĕш революцийен тапхăрĕпе çыхăннă. 1905—1907 çулсенче ĕмĕрсем тăршшĕпех патша саманин пусмăрĕ айĕнче пурăннă чăваш халăхĕ пĕтĕм Раççей ĕçхалăхĕпе пĕрле хастаррăн кĕрешĕве çĕкленет. Ку ĕнтĕ *чăваш халăхĕн те наци туйăмĕ вăранса пынине* уççăнах кăтартнă.

К. В. Ивановăн литература ĕçне пуçăннă тапхăрти пĕрремĕш произведенийĕсенче, сăмахран, вырăсларан ирĕклĕ куçарнă «Вăранăр, тапранăр», «Дубинушка» юрăсенче, поэт революцилле шухăш-туйăмпа хавхаланни лайăх курăнать. 1906 çулта поэзи ăсталăхне алла илес тĕллевпе хавхаланнă йĕкĕт вырăссен демократилле поэзине çине тăрсах тĕпчет, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов, А. В. Кольцов сăввисемпе поэмисене вулать, хăш-пĕр сăввисене куçарать. Поэта уйрăмах М. Ю. Лермонтов поэзийĕн асамлă тĕнчи, вăл сăнарланă вăйлă характерлă, ирĕклĕхе талпăнакан çынсем, сахал сăмахпах шухăша пат татса калама май паракан экспрессилле майсем илĕртеççĕ. М. Ю. Лермонтов чăваш поэчĕн чи юратнă вĕрентекенĕ пулса тăрать. Вырăс поэчĕн витĕмĕ К. Ивановăн пĕтĕм пултарулăхĕнче уççăнах палăрать.

К. Иванов унăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине» куçарма пикенет. Ку вăл уйрăмах йывăр ĕç пулнă, ăнсăртран мар пулĕ, В. Г. Белинский çак поэмăна нихăш чĕлхене те куçарма май çук тесе çирĕплетсех каланă. Анчах та çак ĕçе пурнăçлама хăю çитерни тата ăна ăнăçлă пурнăçлани поэта хăй вăйне шанма, чăваш пурнăçне сăнласа эпикăлла пысăк калăплă произведени çырма хавхалантарасси паллă пулнă. Поэмăна куçарнă чух К. Иванов хăй умне икĕ пысăк тĕллев лартнă: пĕрремĕшĕ — вырăс поэчĕн стилĕпе хăйевĕрлĕхне май килнĕ таран туллин упраса хăварасси, иккĕмĕшĕ — чăвашла вулаканшăн оригиналлă приизведени пекех ăнланмалла куçарасси. Ют чĕлхене ăста пĕлнисĕр пуçне, кунта вырăс халăхĕн йăли-йĕркисемпе фольк-

лорне, унӑн историне тӗплӗн пӗлни кирлӗ пулнӑ. Тӑван халӑх сӑмахлӑхне лайӑх пӗлнӗ поэт вырӑс чӗлхинче ҫирӗпленнӗ фразеологилле сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе эпитетсене килӗшӳллӗ чӑвашлатса ӑнӑҫлӑ куҫарать. К. В. Иванов шутланӑ тӑрӑх, М. Ю. Лермонтов поэминчи вӑйлӑ характерлӑ геройсем Хаяр Иван ӗмпӳ, Калашник хуҫа, Кирипей чура хӑйсен хастарлӑхӗпе, хӑюлӑхӗпе чӑвашла вулакана та куҫне уҫмашкӑн хавхалантарма пултарнӑ. К. Иванов, И. Яковлев традицийӗсене ӑша хывса ҫитӗннӗскер, искусствӑпа литературӑн асамлӑ вӑйӗпе пӗлтерӗшне тарӑн ӑнланнӑ. Тӗнче литературинчи нихҫан асран кайми ҫутӑ сӑнарсем кашни ӑрӑвах пурнӑҫа ҫӗнетессишӗн, ӑна илемлӗрех тӑвассишӗн кӗрешме хавхалантараҫҫӗ. Литературӑн общество пурнӑҫӗнчи пӗлтерӗшне уйрӑмах чӑваш халӑхне ҫутта кӑларас тӗллевпе парӑнса ӗҫленӗ С. Михайлов, И. Яковлев т. ыт. те пысӑка хунӑ. Урӑхла каласан, ҫутӑлӑх литератури этеме воспитани парса пурнӑҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме тӑрӑшнӑ.

К. Иванов «Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юрра» куҫарнӑ чухне чӑваш ӗҫҫыннин хуйхи-суйхине, унӑн тертлӗ пурнӑҫне асра тытса тӑрать. Чӑвашла вулакана ӑнланмалла пултӑр тесе, вӑл поэмӑна юрӑ умӗн каланӑ сӑмахпа пуҫлать. Умсӑмахра К. Иванов вырӑс патшалӑхӗн Хаяр Иван ӗмпӳ патшара ларнӑ вӑхӑтри хӑшпӗр паллӑрах ӗҫӗсене ҫырса кӑтартать. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл уйрӑм сӑнарсен хӑйевӗрлӗхне те ӑнлантарма тӑрӑшать. Поэт Хаяр Иванӑн вырӑс патшалӑхне вӑйлатас тата пӗр ҫӗре чӑмӑртас енӗпе тунӑ усӑллӑ ӗҫӗсене уйрӑмах палӑртать. Патша сыхлавҫи, Кирипей Хаяр Ивансӑр пуҫне, урӑх никама та пӑхӑнмасть. Ирӗклӗ те вылянчӑк пурнӑҫпа иртӗхсе кайнӑскер, Кирипей ҫын арӑмне урамра халӑх умӗнчех намӑслантарать. Калашник хуҫа вара хӑйӗн арӑмӗпе кил-йышӗн чысне хӳтӗлес тӗллевпе Кирипее хирӗҫ хаяр кӗрешӗве тухать. Патшан аскӑн чурипе ачашне ку таранччен никам та ҫӗнтерейменнине пӗле тӑркачах тата куншӑн хаяр ӗмпӳ пуҫран шӑлманнине ӑнлансах, пӗр шиксӗр тухать Калашник хуҫа хӑйӗн ырӑ ячӗпе чысне хӳтӗлеме. Тавӑрать вӑл хӑйӗн тӑшманне, анчах хӑй те вилет: патша ҫак пӑлхавҫӑн пуҫне касма хушать. Пӗрремӗш революци кӗрлевӗпе пӗр вӑхӑтра ҫакӑн пек ирӗк шухӑшпа тапса тӑракан поэмӑна чӑвашла куҫарни урӑх нимӗскере те мар — ирӗклӗхшӗн кӗрешӗве ҫӗкленме ытарлӑ чӗнсе каланине пӗлтерни сӑмахсӑрах паллӑ пулнӑ ӗнтӗ. Поэмӑн тӗп шухӑшне вӑл вӑхӑтри вулакансем шӑпах ҫапла ӑнланнӑ та.

К. Иванов вырӑс поэчӗн сӑввисене те юратса, пысӑк ӑсталӑхпа куҫарать. Куҫару валли яланах вӑл паянхи пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑннӑ шухӑш-туйӑма палӑртма май паракан сӑвӑсене суйласа илет. Тӗслӗхрен, «Пирӗшти» («Ангел») сӑвӑри ҫӗр ҫинчи асаплӑ пурнӑҫа тӳсме тепӗр мӗскӗн чуна йӑтса анакан пирӗшти сӑнарӗ поэтшӑн тӗрӗсмарлӑхпа тулса ларнӑ патша саманине сивлеме меллӗ сӑнар пулнӑ. Ҫутҫанталӑкпа тавралӑха чӗрӗлӗх кӳрекен ҫил-тӑвӑлшӑн тунсӑхлакан парӑс сӑнарне те

(«Парăс») поэт кăмăллană. Философилле тарăн шухăшлă «Хумсемпе çынсем», «Чул ту», «Тусен тăррисем», «Пурнăç курки», «Тĕрме çынни» сăвăсенче М. Ю. Лермонтов хускатнă гуманизмпа тĕрĕслĕх ыйтăвĕсем чăваш поэчĕн чун-хавалĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнă. Çавăнпа поэт вĕсене уйрăмах пысăк тимлĕхпе, пĕтĕм чун-хавалĕпе куçарать.

Н. А. Некрасовăн «Хресчен çынни хĕрсессĕн...», «Выçă юрă», А. В. Кольцовăн «Сивĕ çил вĕрет...», «Тӳпепе хĕвел...» сăввисенче К. Иванов канма пĕлмесĕр ĕçлекен, çапах та хĕн-асапран тухайман, тăраниччен çăкăр çиеймен чăваш çыннин шăпине курнă.

Вырăс поэчĕн произведенийĕсене куçарни К. Ивановшăн чĕлхене туптаса якатнипе пĕрлех чăвашла сăвă хывас ĕçе аталантарма та кирлĕ пулнă. Халăх сăмахлăхĕн никĕсĕнчи силлабикăпа пĕрлех поэт куçарура силлабо-тоника виçипе те усă курать. Сăмахран, çак виçепе К. Иванов «Парăс» сăвва куçарать. Вырăс поэчĕн икĕ сыпăклă ямбпа çырнă сăвви, чăвашла виçĕ сыпăклă анапестпа куçарнăскер, оригинал пекех хитре те янравлă илтĕнет.

К. Иванов вырăсларан куçарнă хушăрах чăвашла та çырма пикенет. Поэтăн малтанхи сăввисенчех тăван тавралăх илемĕ куçа илĕртет, вĕсенче çутçанталăка юратса сăнама пĕлни курăнать.

Ешĕл вăрман айккипе
Çырма юхать кĕрлесе,
Хĕвел çути шывĕпе
Вылять тĕрĕ тĕрлесе.

Таса çырма йăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать.
Мĕнпур, мĕнпур çут тĕнче
Ташлать, сикет, савăнать.

Çакăн евĕрлĕ пейзаж тĕрленчĕкĕсем татах та пур поэтăн, вĕсем пысăк ӳкерчĕк эскизĕсем евĕр, каярахпа «Нарспи» поэмăна вырăнлă та килĕшӳллĕ сăрхăнса кĕреççĕ. Поэт лирики — çутă шанчăкпа тулнă, хавхалануллă лирика. Анчах поэт кĕслине хаваслă юрă юрлама çеç ĕнермен. Тăван халăхăн тертлĕ пурнăçĕ, вăл тĕттĕмлĕхре асапланни поэта мĕн ачаранах, йывăр шухăшсенчен хăтăлма паман. Чунĕ кӳтсе çитнĕ самантра К. Иванов çакăн евĕрлĕ те çырать:

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

Поэтăн тăван халăхĕ умĕнчи тивĕçĕ калама çук пысăк. Пурăнма пуçланă вăхăтра этем ытларах сенкер те илемлĕ сăрăсене кăмăллать, тĕнче те ăна романтикăлла вĕçеве йыхăрать. Анчах та халăх урапине кӳлĕнсен, поэт пурнăçăн тӳнтер енĕсене те асăрхама пуçлать, ун йывăрлăхне халăхпа пĕрле тӳсме пикенет; халăх хуйхипе терчĕ-асапĕ ун ывăлĕн хуйхипе терчĕ-асапĕ. Акă мĕншĕн «Ватă вăрман шухăшĕ» халапăн сыпăкĕнче пессимизмла туйăм пĕртте сисĕнмест, поэтăн лирикăлла геройĕ пурнăç пăрăнăçĕсене тăрă ăспа виçсе хаклать.

Чи малтан çырнă сăвăсенчен пĕринче («Выçă аптранăскерсем») К. Иванов çитмен пурнăçа пула чăваш этемĕ тем тĕрлĕ асап курнине сăнарлă ӳкерсе кăтартать:

Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни çăварна?
Ларса хырăм тăранмасть,
Мĕнле шухăш шухăшлан?
Ĕç шырарăн — тупăнмасть,
Ăçта каяс тен паян?
— Илĕп çĕçĕ, пурттăма,
Чĕнĕп пĕрер юлташа,
Кайăп юта, вăрлама...
Ан асăнăр чăваша.

Çĕрĕ те хресченĕн хĕсĕк, ачи-пăчи те йышлă, тара кĕрĕшес тесен те, пуян тавраш тӳрех йышăнасшăн мар. Мĕн тăвас тен урăх, выçса вилсе выртас мар тесен, этем тем тума та хатĕр. Пĕри вăрра каять, тепри курака чĕрĕллех тытса çиет, нумайăшĕ вилеççĕ. «Выçă аптранăскерсем» сăвва поэт юмах формипе усă курса çырнă: ватти каласа панине ача сак çинче итлесе ларать. Апла пулин те, сăвăра кăтартнă ĕçсем юмахран аякра тăнине, кунта чăваш пурнăçĕн хăрушă чăнлăхне сăнласа панине эпир уççăнах куратпăр. Поэт юмах формипе каярахпа та чылай усă курать, анчах ку вăл хăйне май ытарлăх çеç пулнă. Çемьери танмарлăха е социалла тĕрĕсмарлăха питленĕ чух поэт хăй шухăшне юмах е халап тумтирне тăхăнтарать. Куна ăнланса илме йывăр мар ĕнтĕ, мĕншĕн тесен юмах-халап халăхра анлă сарăлнă. Сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлав таврашне е юмаха улахра та, ушкăнпа пухăнса итлесе ларма та пит кăмăллă. Çак жанр пĕлтерĕшĕ çырулла литература вăйлах аталанайман халăхсен сăмахлăхĕнче уйрăмах пысăк вырăн йышăннă.

«Икĕ хĕр» хайлана К. Иванов халăх хушшинче анлă сарăлнă сюжетпа усă курса çырнă. Ашшĕ хăйĕн аслă хĕрĕнчен ыйтать: «Мĕн мăнтăр?» — тет. Чее те йăпăлти хĕр сăмахне ĕненес пулсан, ашшĕ килĕнчи кăвак лашаран мăнтăрри нимĕн те çук. Çавăн пекех, вăл каланă тăрăх, ашшĕ килĕнчи вĕллери пылран тутли тата тӳшек-минтертен çемçи те урăх ним те çук. Кăмăлĕ çырлахнă ашшĕ аслă хĕрне «ăслă» сăмахшăн çур мулне парать. Ашшĕ кĕçĕн хĕрне те çак ыйтусенех парать. Аслă та тӳрĕ кăмăллă хĕр ашшĕ кăмăлне тивĕçтереймест, вăл хăй шухăшне

пытармасăр калать: çут тĕнчере çĕр мăнтăр, ыйхă тутлă, алă çемçе. Ашшĕ шухăшĕпе, ку хĕртен пархатар сахал, ăна вăл килĕнчен хăваласах ярать. Çапла вара, «тӳррĕн калакан тăванне юрайман» текен ваттисен сăмахĕ чăна килет. Мулпа пуянлăхшăн чăнлăха сутма кирлĕ мар текен шухăша çирĕплетет кунта поэт. Ан тив, кĕçĕн хĕрĕ, нимсĕр тăрса юлса, килтен тухса кайтăр, анчах та вăл чун-чĕрипе таса этем.

«Тимĕр тылă» балладăра та поэт мораль ыйтăвĕсенех хускатать. Çемьери танмарлăха, патриархаллă йăла-йĕрке тытăмĕн кивелнĕ енĕсене пăрахăçлама кирлине астутаракан поэт сасси çак балладăра татах та уççăнрах янрать. Ваттисем çамрăксене (уйрăмах кил-йышра) сăмах чĕнме памасăр хĕсĕрлесе усрани чăвашра та пулнă.

«Тимĕр тылăра» К. Иванов халăх хушшинче çӳрекен юмах вариантне тĕпе хывать. Тимĕр тылла чăваш хĕрарăмĕсем юратмаççĕ иккен:

Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларать, тет,
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккать, тет.
Кантăр тыллас тесенех,
Çӳпне куçа кӳртет, тет.
Çав çӳп куçра юлсассăн,
Çын тухатмăш пулать, тет.

Акă мĕншĕн юратмаççĕ чăваш хĕрарăмĕсем тимĕр тылла. Çапла ăнлантарса кăтартнă хыççăн автор хăйсен ялĕнче пулса иртнĕ пĕр ĕç çинчен каласа парать. Вĕсен ялĕнче пĕр карчăкăн тимĕр тылă пулнă-мĕн. Çак карчăк таврара паллă тухатмăш шутланнă.

Пурăнăçра çав карчăк
Çĕмĕрттеретчĕ анчах:
Пурччĕ унăн качака,
Икĕ сурăх, пĕр кушак;
Чалăш пӳрчĕ тăрринче
Тăманасем усратчĕ;
Тăманасем патĕнчех
Тимĕр тылли ларатчĕ...

Йăлтах чăн пурнăçра пулма пултарнă пек çырса кăтартать автор: карчăк кил-çурчĕ, выльăх-чĕрлĕхĕ т. ыт. те. Çав хушăрах çутçанталăк вăйне пăхăнакан, тĕшмĕше ĕненекен этеме хăратса тăракан асамлă вăй та пур иккен балладăра. Тимĕр тылă пӳрт тăрринче тăманасем патĕнчех пурăнать. Тăмана-çăхан тавраш чăваш фольклорĕнче авалтанах ырă мар, хура хаяр вăйсен символĕ шутланнă. К. Иванов символла сăнарсемпе «Нарспи» поэмăпа ытти произведенийĕсенче те туллин усă курнă.

Тимĕр тылă хуçи икĕ тăлăх кинĕпе пурăнать. «Икĕ кин те лайăх кин, иккĕшĕ те сарă кин»,— тет автор. Анчах та аслă

кинĕ ăна питех интереслентермест иккен, унăн ячĕ те пире кирлех мар, тет вăл. Çапла пĕрре асăнса иртнĕ хыççăн аслă кин балладăра тек курăнмасть те. Çапах та çак сăнар балладăна ăнсăртран кĕмен: автора ахаль кин çеç мар, кĕçĕн кин кирлĕ пулнă-мĕн. Кĕçĕн кин тенĕрен, К. Иванов халапĕсемпе балладисенче пуринче те тенĕ пекех кĕçĕннин шăпи ăраскалсăр, пĕтĕм хуйхă-инкек ун çине тиенет, час-часах кĕçĕнни тĕрĕсмарлăха пула вилет. Поэт халăхра сарăлнă юмахсене тарăн тĕпчесе пĕлнĕ, *вĕсенче те кĕçĕннин шăпи яланах телейсĕр.*

Кĕçĕн киннин, каласан,
Ячĕ унăн Чĕкеçчĕ,
Хăй те чĕкеç пекехчĕ,
Ытарма çук аванччĕ,
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çӳхе чуптума.

Йăваш та ĕçчен кинне карчăк пушшех юратмасть. Акăр ялĕнчи тăванĕсем патне хăнана яма Чĕкеç карчăка виçĕ кун йăлăнать, виççĕмĕш кунне каçпа тин, ирĕк илсе, кĕçĕн кин çула пуçтарăнать. Сĕтпе çăрса виçĕ юсман хатĕрлет Чĕкеç. Юсманран тĕрлĕ усал-тĕсел хăрать тенине ĕненнĕ ĕлĕк чăвашсем. Чĕкеç лаша кӳлет те çула тухать. Анчах та тухатмăш карчăк хăй кинне: «Каях, курăн-ĕçке ху кунна»,— тесе ахальтен каламан иккен, вăл Чĕкеç пуçне пĕтерме шутланă. Карчăк хăй тыллине йыхăрса илет те Чĕкеç хыççăн кăларса ярать:

«Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!»

Виç хутчен тимĕр тылă, Чĕкеç юсманĕсен хăватне парăнса, карчăк патне каялла сиксе таврăнать. Акă юлашки юсманне те пăрахса хăварнă ĕнтĕ карчăк кинĕ. Юсмансем, асамлă та шанчăклăскерсем, Чĕкеçе пĕрре çеç мар çăлчĕç, анчах тăван аппăшĕсемпе пиччĕшĕ çăлмарĕç çав ăна, çĕрле çӳрен хăна çук тесе, килне кĕртмерĕç. Чĕкеç, тухатмăш карчăк килĕнче терт-хĕнпе пурăнса, мĕн тери тунсăхласа çитнĕччĕ пуль аппăшĕсемпе пиччĕшне...

Аслăк çине хăпарса пытаннă Чĕкеçĕн пуçне тимĕр тылă çиет. Вулакан туять: карчăк тимĕр тылли мар, ытларах аппăшĕсемпе пиччĕшĕ айăплă Чĕкеç вилнишĕн, тесшĕн автор. Çĕрле вĕсенчен пĕри те пулин хапхине уçса кĕртнĕ пулсассăн, Чĕкеç сывах юлнă пулĕччĕ. Автор гуманизм моралĕпе çыхăннă тĕп ыйтусене (çынлăх, тăванлăх, пĕрне-пĕри хисеплесси т. ыт. те) çивĕччĕн лартать.

Жанр хăйевĕрлĕхĕпе «Тимĕр тылă» романтизмла искусствăра палăрнă балладăсене (сăмахран, В. А. Жуковскипе А. С. Пушкинăн, М. Ю. Лермонтовăн балладисене) çывăх. Тимĕр тылă, тухатмăш, юсман тата ытти асамлă вăйсем реализм-

ла произведени картине шăнăçманни çеç мар, баллада ырăпа хура-хаяр вăйсен хирĕçĕвĕ çинче никĕсленни те шухăша ярать. Çак конфликтах эпир «Тăлăх арăм» балладăпа «Шуйттан чури» ятлă романтизмла трагедире те куратпăр. «Нарспи» поэма та тĕп конфликчĕпе çÿлерех асăннă произведенисене çывăх тăрать.

Акă карчăк сарă кин пуçне çинĕ тимĕр тыллине каялла йыхăрать. Кăтăрнă тылă таçта аякра тем çĕмĕрет. Çĕр çĕмĕрсе шалтлатса таврăнакан тылă карчăк пуçне те татса ывăтать. Тухатмăш пырĕнчен хура юн палкаса тухать. Хурлăхлă поэма-балладăна çакăнпа вĕçлеме те май килнĕ темелле ĕнтĕ. Анчах автор, ĕненмеллех пултăр тенĕ пек, çĕрле пулса иртнĕ ĕçсене ял çыннисем куçĕпе тепĕр хут кăтартать. Мĕн пулса иртнĕ-ха Акăр ялĕнче?

Чĕкеç инкен пиччĕшĕ
Акă выльăх апатлать —
Хăй йăмăкĕн виллине
Тупать улăм ăшĕнче.

Туять-ши çак этем хăй айăпне, ăнланать-ши вăл чунсăрлăхне пула тăван йăмăкне вĕлернине? Автор кун пирки нимĕн те каламасть. Тимĕр тылă сарă кин пуçне çеç çинипе çырлахман иккен, вăл сиенлĕ ĕçсем тата та тунă. Акă Акăр ялĕн урамĕ тăрăх арман хуçи пырать:

Шурă сухалĕ ик хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт,
Туйи çине таяннă,
Хăй кăвакал пек утать.

Арманне ишсе кайнă-мĕн унăнне усалсем çĕрле (пĕлетпĕр, ку вăл — тимĕр тылă ĕçĕ), пысăк хуйхă этемĕн.

Хăйсен ялĕнче сĕм-çĕрле пулса иртнĕ ĕçе те кăнтăр çутипе кăтартать автор. Авă тухатмăш карчăк тĕлĕнче ушкăн çын сĕрлет. Çĕрле тухатмăш пуçне такам татса кайнă иккен.

Карчăк выртать, хускалмасть,
Таврашĕнче хура юн.
Певĕ выртать пĕр çĕрте.
Пуçĕ выртать пĕр енче.

Мачча çинче тимĕр тылă сасси илтĕнмест.

Юмах мар ку, автор хăйсен ялĕнче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа парать вулакана. Ĕненмелле-ши е ĕненмелле мар-ши вăл каласа панисене? Ахаль юмах-халап çеç пулсан, автор вулакана ĕнентерме тăрăшман пулĕччĕ. Пăхăр-ха, епле курăмлă пайрăмсемпе ÿкерет вăл карчăк виллине е тата çынсемпе калаçса хурлăхне пусаракан арман хуçин сăн-пуçне. Вулаканшăн пĕртте кулăшла курăнмасть çак сăнар. Антив, хăй арманне кам ишсе кайнине вăл тĕп-тĕрĕсех пĕлмест пултăр, анчах та унăн

хурланма сăлтавĕ пысăк. Эпир, Акăр ялĕнчи çĕрлехи ĕçсене ирхине пĕлсен, пушшех чăн вырăнне йышăнатпăр. Автор тĕллевĕ арман хуçин тĕшмĕшлĕхне кăтартса парасси мар. Балладa пĕтĕмпех хурлăхлă кĕвĕпе ĕнерĕннĕ, унăн пĕр-пĕтĕмĕшле кĕввинче кулăш валли сăлтав та, вырăн та çук. Ку вăл — ырă та çутă вăйăн хаяр вăя пула килсе тухакан трагедийĕ. Пĕтĕмлетсе каласан, К. Иванов балладăра чăн пурнăçа ӳкерсе кăтартать, анчах та çакă вăл — автор фантазийĕпе сăлтавланса улшăннă, романтизмла искусство законĕсене шута илсе ӳкерĕннĕ пурнăç чăнлăхĕ.

Балладăра автор анлăн усă курнă романтизм сăрĕсемпе уйрăм мелĕсем ăнсăртран килсе тухнăскерсем мар. Эпир çак произведенири ĕçсене усал-тĕселпе хура-хаяр вăй символĕсем пĕр чăрмавсăрах хутшăннине палăртнăччĕ ĕнтĕ. Балладăн тĕп конфликчĕ те çав вăйсемпе ырă вăйсем хушшинчи кĕрешӳпе çыхăннă. Сăмахран, тухатмăш карчăкпа Чĕкеç хушшинче мĕнле те пулин пĕрпеклĕх пур-и? Çук, пулма та пултараймасть. Кусем контраст йĕркипе калăпланă хире-хирĕçле сăнарсем. Çĕр çинче вĕсем юнашар пурăнма пултараймаççĕ. Мĕншĕн-ха карчăк чăннипех те Чĕкеç пек эреветлĕ-теветлĕ сарă кинне юратмасть? Куна автор та татса калаймасть: ырă кăмăллă, ĕçчен, таса чунлă пулнăшăн ахăр.

«Тăлăх арăм» балладăра К. Иванов юмах поэтикин майĕ-мелĕсемпе ытларах усă курать. Балладa пуçламăшĕ юмах пуçламăшне çывăх.

Юмах юпа тăрринче,
Хам урхамах çиййĕнче.
Вĕçсе-вĕçсе антăм та
Килтĕм-тухрăм çакăнта
Аслă вăрçă хушшине,
Икĕ халăх вăрçнă çĕре.

Ĕçсем те кунта юмахри евĕр пулса иртеççĕ. Мĕн курать-ха вăрçă хирне ăнсăртран килсе тухнă халапçă? Çичĕ чăваш пĕртăван тăшманпа çапăçаççĕ иккен. Паттăррăн çапăçаççĕ чăвашсем хаяр тăшманпа, йĕри-тавра вăрçă шавĕ кĕрлет. Çакăнта пĕр кун пурăнса вăрçă хирне сăнанă хыççăн халапçă урхамахне туртса ярать те çеçенхире пырса тухать. Хунямăшĕ хăйĕн çичĕ кинĕпе ирех тырă вырма тухнă иккен. «Çичĕ тăван ют çĕрте, арăмĕсем çак хирте». Çичĕ кин юрласах тырă выраççĕ, анчах карчăкăн темшĕн ăшĕ çунать, тата вăл ывăнсах çитет. Ытла ăшĕ çуннипе вăл урапа патне каять те çапла каласа çичĕ кашăк ывăтать:

Пӳлĕх, кăтарт тĕрĕсне,
Кашăк, кала чăннине:
Хăш кин юнлă кашăклă —
Пĕтнĕ унăн упăшки.

Кĕçĕн кинĕн кашăкĕ юнпа тулса ларать, карчăк ăшĕ ăн-

сăртран çунман иккен. Акă йĕре-йĕре вăрçă хирĕ еннелле утакан кĕçĕн кин аслă пиччĕшне курать:

Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмаран-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Ларать çӳл ту курăнса,
Çӳл ту çинче пӳрт ларать,
Унта шăллăм çывăрать.
Тимĕр кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Шурă тутăр пит çинче,
Симĕс тукмак аллинче.

Каллех йĕре-йĕре малалла утать кĕçĕн кин. Акă тепĕр пиччĕшне тĕл пулать вăл, унтан — теприне. Вĕсем те шăллĕ çӳллĕ ту çинчи пӳртре çывăрать тесе каласа яраççĕ кинне. Утсан-утсан тинех хайхи çӳллĕ ту тухса тăрать ун куçĕ умне. «Тĕтре çӳрет шуралса, çӳлĕ ту тавра явăнса». Хĕвел те савăнмасть, хăй çутинчен вăтаннăн пĕлĕт айне пытанать.

Çил тухать те çил каять,
Хурлăхлă юрă юрлать.
Çӳлĕ тăвăн тĕлĕпе
Çăхан карать çăварне,
Хăйĕн çивчĕ сăмсипе
Апат пурне сиснипе.
Ту тăрринче пӳрт ларать,
Чăваш хытă çывăрать.

«Кун килет те кун иртет,— чăваш хытă çывăрать». Текех ĕнтĕ вăл вăранаймĕ, арăмĕ темле ыталаса йĕрсен те. Виçĕ кун эрленсе макăрнă хыççăн кĕçĕн кин упăшки çӳçĕн виçĕ ылтăн пĕрчипе çакăнса вилет. Çак хурлăхлă ĕç пулса иртнине мĕн пуçламăшĕнчен веçне çитиччен хăй куçĕпе курса тăнă халапçă сăмахне юмах формипе вĕçлет:

Эпĕ те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса,
Урхама вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

«Тимĕр тылăпа» танлаштарса пăхсан, «Тăлăх арăм» балладăра юмах форми ытларах палăрса тăрать. Чăнах та, вĕсенче иккĕшĕнче те автор хăй курни-илтнине пĕрремĕш сăпатран каласа парать. «Тăлăх арăм» балладăра автор вулакана ĕнентересшĕн питех тăрăшмасть. Ăçта пулса иртеççĕ-ха, сăмахран, кунти ĕçсем? Балладăри лару-тăрусен вăхăчĕ те, вырăне те паллă мар. Ансăртран пырса тухать халапçă вăрçă хирне. Кун хыççăн асамлă юмахри пек ним мар çичĕ кинпе вĕсен хунямăшĕ тырă выракан çеçенхире çитсе тухать вăл. Вулакан курать: автор детальсемпе фактсене суйланă чухне ытлашши уясах тăмасть. Юлашкинчен халапçă каллех вăрçă хирне çитет. Ĕçсем

ăçта-ăçта пулса иртни те, тĕрлĕрен лару-тăру та чăн-чăн юмаха аса илтереççĕ. Кунсăр пуçне, юмахри анлă сарăлнă хиссеппе «çиччĕпе» усă курать автор. Каллех телейсĕрри, яланхи пекех, кĕçĕн кин. Мĕншĕн-ха кĕçĕнни телейсĕр? Мĕнле ÿкерсе кăтартать-ха автор çак сăнара? Чăн та, ун сăн-пичĕ те, кăмăлĕ те çиелтен пăхнипех палăрмаççĕ. Чĕкеç вара чăннипех чĕкеç пекчĕ. Кĕçĕн кинĕн кăмăлĕпе чун-чĕри вăрттăнлăхне шалтан уçса кăтартать автор. Кашăкĕ юнпа тулнă хыççăн пĕлет ĕнтĕ çак кин хăйĕн юратнă мăшăрĕ вилнине. Кун пирки иккĕленмест пулин те, çапах вăл, упăшки виллине те пулин тупса, унпа сывпуллашса, ÿтне çĕре чикмеваскать.Аслă пиччĕшне тĕл пулсан вăл: «Курмарăн-а шăллуна?» — тесе ыйтмасть,— «Шăллунне курмарăн-и виллине?» — тет. Инçетре выртать-и ун вилнĕ мăшăрĕ е çывăхра-и, ăна вăл пурпĕр тупса тирпейлесе пытарĕ. Темиçе кун хушши йĕре-йĕре утнă хыççăн кĕçĕн кин тупать мăшăрĕн ÿтне. Тирпейлесе пытармалла та киле таврăнмалла пек çеç ĕнтĕ. Анчах та тăлăх арăм çутă тенчери пĕртен-пĕр çывăх та хаклă çынсăр, упăшкисĕр текех пурăнма пултараймасть. Вăл хăй те çакăнса вилет. Нарспи те çаплах тăвать: Сетнерпе пурăнма памарĕç, маншăн çут тĕнче хавас мар тесе, хăй çине алă хурать. К. Иванов геройĕсем пурте максималистсем, вĕсен çурма виçе çук: е пĕтĕмпех, е ним те кирлĕ мар.

Кĕçĕн кин сăнарĕ чăваш халăх фольклорĕнчи чи çутă сăнарсене çывăх. Вăл юратура шанчăклă, вилессе те мăшăрне чунчĕрипе парăнса, шанчăка тÿрре кăларса вилет. Кил-йыш чысне нимрен те çÿле хурать.

Çичĕ паттăр юмахри паттăрсене питех те çывăх. Икĕ халăх, тет автор, вĕсенчен пĕри чăвашсем, тепри — вĕсен тăшманĕсем. Балладăна, паллах, 1905 çулхи вăрçă кĕрешĕвĕ сăрхăнса кĕни сисĕнет. Ансăртран мар вăл дневникĕнче: «вăрçă хăрушă япала» тесе çырса хунă. Апла пулин те, К. Иванов авалтанпах халăхра упраннă юмах сюжечĕпе усă курнă [21]. Чăвашсем балладăра пăшал-тупă таврашĕпе мар, чукмар-сăнăпа, урхамахпа çеç хĕçпăшалланнă-ха. Балладăри ĕçсем героикăлла эпосри паттăрсен чаплă ĕçĕсене аса илтереççĕ.

К. Иванов балладăна çичĕ сыпăклă силлабикăн çăмăл виçипе çырнă. Поэт ăсталăхĕ йĕрке вĕçĕсене мăшăрлă тата хĕреслĕ рифмăланинче те, вĕсене килĕшÿллĕ улăштарса пынинче те яр-уççăн курăнать.

Романтизм мелĕсемпе К. Иванов «Шуйттан чури» ятлă сăвăлла трагедийĕнче уйрăмах туллин усă курнă. Автор трагедие çырсах пĕтереймен пулин те, унăн тĕп конфликчĕ уççăнах курăнать:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.

Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать,—

тенĕччĕ поэт «Нарспи» поэмăра. «Шуйттан чури» трагеди умĕн эпиграф вырăнне асăннă йĕркесене лартни питĕ вырăнлă пулнă пулĕччĕ. Шăпах çав философилле шухăша уçса парас тĕллев лартнă та поэт трагедире. Этем вăйлă, ăс-тăнлă, вăл çутçанталăка пăхăнтарать, анчах К. Иванов çав трагедие çырнă чухне, паллах, А. С. Пушкинăн «рыцарьле трагедийĕсене» те, Шекспир трагедийĕсене те, Гетен «Фаустне» те асра тытнă. К. Иванов трагедире çынна ухмаха кăларакан туртăма — çăткăнлăха, çак туйăмăн ирсĕрлĕхне шалтан уçса парать.

Икĕ пĕртăван, пиччĕшĕпе шăллĕ, вăрçă хирĕнче çӳреççĕ. Анчах кунта алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва хӳтĕлеме килмен вĕсем. Вилнĕ е аманнă çынсен кĕсйи-хутаçĕсене ухтарса, вĕсен пурлăхне çаратса пуйма шухăш тытнă иккен çак икĕ пĕртăван. Вĕсен тĕп тĕллевĕ шăллĕн монологĕнче уççăн курăнать. Çăткăнлăхăн виçи те, чикки те çук мĕн. «Çынна йĕртсе-макăртса пуçтартăмăр пуянлăх», тет кĕçĕнни. Анчах вĕсем кунпа çырлахман иккен. Ывăлĕсем вăрçăра вилнисене çаратма шухăш тытнине пĕлсен, вĕсен амăшĕ йĕре-йĕре урайĕнче йăваланать. Юлашкинчен вăл ӳкĕте кĕмен ывăлĕсен пуçĕсем çине ылхан кустарать.

Арăм ячĕ ӳлесе,
Тăлăх юласса сиссе:
«Ан кай, ан кай, пĕтетĕн,
Чуну ӳкĕ тамăка...»
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йăлтăртатса тăратчĕ.

Чĕререн ӳкĕнет кĕçĕнни, анчах халь кая юлнă ĕнтĕ. Укçашăнах пиччĕшĕ шăллĕне кăкăрĕнчен сăнăпа чикет, лешĕн ӳчĕ хуллен сивĕнсе пырать.

Этем укçапа пуянлăха çăткăнла юратнине пула чунне шуйттана сутнине, вăл çынлăхне пачах çухатса ухмаха тухнине К. Иванов пиччĕшĕн шăпи урлă лайăх кăтартса парать. Акă шăллĕн укçине туртса илме пиччĕшне шуйттан çине-çинех хĕтĕртет, анчах лешĕ хăю çитереймест-ха:

Ухмах çыннăн куçĕсем
Йăлтăр-ялтăр çунаççĕ,
Хутаç çине пăхнă та
Хутаç патне туртăнать.

Укçасăр пуçне, урăх ним те курмасть ĕнтĕ халь этем, укçа куçпăвăшĕнчен ниепле те хăтăлаймасть. Ку чăннипех те трагедилле лару-тăру. Юлашкинчен ăсран тухас патнех çитнĕ пиччĕшĕ шăллĕне вĕлерет те ун укçине илнипе савăнса ташша ярать. Акă ĕнтĕ этемĕн ĕмĕчĕ тулчĕ темелле: «Мана мĕн пит

кирлĕччĕ? Укçа, укçа,— акă вăл!» Ылтăн-кĕмĕл çурт лартма, пинĕ-пинĕпе выльăх-чĕрлĕх тытма ĕмĕтленет халь этем. Халь ун пурте çителĕклĕ. Анчах та çак самантра юман хыçĕнчен шуйттан ахăрса сиксе тухать, вăл та этемпе пĕрле ташша ярать.

Ухмах çынна курăнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптăвать тутине,
Шуйттан чури тиейсе.

Килелле пуçтарăнма çеç пикеннĕччĕ ĕмĕтпе çунатланнă этем, çав самантра вăл çўлтен темле сасă илтет. Хăрушла та ирсĕр ĕç туса хуни çинчен асăрхаттарать иккен этеме пирĕшти. Çўлти сасса илтсенех, пиччĕшĕ, тăнне çухатса, çĕре йăванать.

Трагедие поэт вĕçлеймен, çавăнпа та вăл малалла мĕнле йĕрпе аталанма пултарнине татсах калама хĕн. Произведенире тĕп конфликта уçса пама, унти характерсене малалла аталантарма мĕнле майсемпе усă курнă пулĕччĕ-ши поэт?

Çакна çирĕппĕнех калама пулать: сюжет аталанăвне çĕнĕ сăнарсем кĕртмесен, трагедие малалла тăсма май килмен пулĕччĕ. Халлĕхе пĕрремĕш пайри ĕçсене хутшăнакан тĕп геройсем — пиччĕшĕпе шăллĕ — иккĕш те вилеççĕ. Чăн та, пиччĕшĕ шăллĕне вĕлернĕ хыççăн сывă юлнă пек курăнать, анчах та курăнать çеç. Мĕншĕн тесен, автор палăртнă тăрăх, çак этем ĕнтĕ халь хура хаяр вăй тыткăнĕнче пурăнма пуçлать. Этем ухмаха ернĕ хыççăн трагедилле лару-тăру сивĕнме пуçлать. Этем, сывă юлас пулсан та, ĕмĕр-ĕмĕр асапланса, ўкĕнсе пурăнĕ: вăл шалти килĕшўлĕхе яланлăхах çухатнă.

К. Иванов произведенийĕсен конфликчĕ яланах çивĕч. «Тимĕр тылăра» та çаплахчĕ, аппăшĕсемпе пиччĕшĕн чунсăрлăхне пула мĕскĕн Чĕкеç вилет. Ют çынсем мар, çывăх тăвансем те пĕр-пĕрине ăнланмаççĕ е пĕрне-пĕри вĕлереççĕ те. Çакна автор пур произведенире те тенĕ пекех пусăм тусах кăтартать. Çынна çын хисеплемесессĕн, чун тасалăхĕпе çынлăха упрамасассăн, этемлĕх аталанма пултараймасть, çынсен хутшăнăвĕсенче килĕшўлĕх пулма пултараймасть. Гуманизм, поэт шухăшĕпе,— этемлĕхе, общество аталанăвне тĕрĕс çулпа илсе пыма пулăшакан сиплĕхлĕ эмел. Сăмах май каласан, Л. Н. Толстой та общество прогресĕн пуласлăхне çынра хăйĕнче курнă, этем хăйне хăй воспитани парса пынипе, мораль тĕлĕшĕнчен çĕнелсе-аталансах пынипе çыхăнтарнă. Пĕр сăмахпа каласан, çакă ĕнтĕ вăл çутă-лăх литературин тĕп принципĕ шутланать. Ăнсăртран мар ĕнтĕ К. Иванов хăй хайлавĕсен никĕсне моральпе çыхăннă хирĕçўсене хывать. Халăха çутта кăларасси, ун ăс-тăнне вăратасси, ялхуçалăх ĕçĕсемпе çыхăннă пĕлўсем парасси пĕрремĕш революци çулĕсенче те тĕп ыйтусенчен пĕри шутланнă, мĕншĕн тесен, çав ĕçе хатĕрлесе çитермесĕр, ĕççыннисене революцие хутшăнтарма та май килмен пулĕччĕ. Этем ăс-тăнĕ, унăн чун-чĕрин

пуянлăхĕ — чи пысăк тӳре, вăлах — этемлĕхе малалла туртакан тĕп вăйсенчен пĕри. Апла пулсан, литература тивĕçĕ — этеме гуманизм принципĕсене ăша хывса вĕсемпе кашни утăмах виçсе пурăнма вĕрентесси. Шăп та лăп çак тĕллеве пăхăнса, К. Иванов этеме ун чун-чĕри яр уççăн курăнакан лару-тăрусенче ӳкерсе кăтартать. Урăхла каласан, поэт романтизм поэтикипе те анлă усă курать. «Шуйттан чури» трагедире, ытти балладăсенчи пекех, асамлă вăй пулăмĕсем те çынсен пурнăçĕпе тӳреммĕн хутшăнаççĕ, вĕсен шăпине те татса параççĕ. Кунта шуйттан та, пирĕшти те т. ыт. те пур. Паллах, çак асамлă вăйсем, халăх сăмахлăхĕн поэтикинче те час-часах тĕл пулаççĕ. Анчах та К. Иванов произведенийĕсен контекстĕнче вĕсем илемлĕх мелĕн çӳллĕ шайне çĕкленнĕ, вĕсем литературăра çеç тивĕçлĕ пахалăхпа уйрăлса тăраççĕ. Çутçанталăкăн тĕрлĕрен пулăмĕсем те трагедире çынсен хуйхи-суйхипе шухăш-кăмăлне палăртаççĕ. Акă пĕр тĕслĕх çеç илер. Ансăр пулса ӳкекен пиччĕшĕн савăнăçне çутçанталăк акă епле хаяррăн сивлет:

Сасартăках çил тухать,
Тухса кĕрлесе каять,
Пĕтĕм çĕре кисретсе,
Аçа шартлатса ярать.

Çакăнтах шуйттан алхасать, ахăрсамана пуçланнă тейĕн. К. Ивановăн пĕтĕм пултарулăхне поэтики енчен пĕтĕмĕшле илсе танлаштарса тишкерсе тухсан, кашни произведенирех тĕл пулакан символсене, асамлă вăйсене тата этем драмине туякан, ăнланакан çутçанталăк пулăмĕсене асăрхамасăр иртме çук. Поэт произведенийĕсен конфликтне тимлĕрех сăнасан, çак шухăша çирĕплетме йывăрах мар. Ку енчен пăхсан, «Нарспи» поэма та К. Ивановăн ытти произведенийĕсенчен пĕртте уйрăм тăмасть.

«Нарспи» — К. Иванов пултарулăхĕнче калăпăшĕпе те, содержанийĕпе те чи пысăк лиро-эпикăлла произведени. Ăна поэма мар, трагеди тесен, тĕрĕсрех те пулмалла-и, тен. Поэмăра чăннипех те трагедилле характерсемпе лару-тăру нумай. Мĕн çинче никĕсленет-ха унăн тĕп конфликчĕ? Çак хирĕçӳлĕх К. Иванов пултарулăхĕшĕн çĕнĕ япала мар. Поэмăра ӳкерĕннĕ сăнарсем, вĕсем хушшинчи конфликт поэтăн балладисенче те вăйлă палăрса çитнĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ автор, вĕсенче каланă тĕп шухăшсене пĕтĕçтерсе, чăваш пурнăçĕн энциклопедине анлă пир çине ӳкерет. Чăваш поэчĕ, чăн-чăн художник куçĕпе пăхса, çакна асăрханă: Европăра, пĕтĕм Раççейре аталансах пыракан капитализмла хутшăнусем чăваш хули-ялĕнче те сарăла пуçланă, çĕршер çул хушши патриархалла йăла-йĕрке çинче никĕсленсе тăнă «тӳлек» пурнăç вĕсен витĕмне пула тĕпренех улшăнма тытăннă. Çак улшăнусен тĕп палли — укçа-тенкĕпе ылтăн нимрен те ытларах хакланса кайнинче курăннă. Капитализм моралĕ мулшăн тус-тăванне, çывăх çыннине вĕлерекене те тӳр-

ре кăларать; ылтăн пулсан, пурте пулать, укçапа танлаштарсан, çынлăх, чун пуянлăхĕ, юрату тенисем ним те мар. «Нарспи» поэмăра аслă гуманист шăпах мул тĕнчин çынсăрлăхĕпе чунсăрлăхне, вăл этемрен ним мар ылтăн чури туса хума пултарнине витĕмлĕ кăтартса парать те ĕнтĕ. Тӳрех калас пулать, поэма ял пурнăçĕнчи классен хирĕçӳлĕхне шалтан уçса парса социалла танмарлăха сивлет пулин те, унта историлле малашлăха тарăн ăнкарса илсе Сетнерпе Нарспин тата ялти чухăнсен кĕрешĕвне революци çулĕпе çыхăнтарса сăнлани палăрмасть. Анчах çакна К. Иванов пултарулăхĕн вăйсăрлăхĕпе çеç çыхăнтарни тĕрĕс мар пулĕччĕ, мĕншĕн тесен кунта чи малтанах поэт тавракурăмĕпе ун пултарулăхĕн хăйевĕрлĕхне тата вăл вăхăтри чăваш литературин аталанăвĕн шайне асра тытас пулать.

Нарспипе Сетнерĕн телейсĕр юратăвĕ арканнин сăлтавĕ мĕнре-ха? Паллах, социаллă танмарлăхра. Çакна Сетнер сăмахĕсенче те уççăнах курма пулать:

Ах, телейĕм çук-тăр çав,
Аçу-аннӳ пит пуян!
Хăйсен пуянлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук çынран.

Чăнах та, çĕрме пуян Михетер кĕрӳ тума хăй пек пуяна çеç суйласа илме пултарать. Сетнер пек хура пӳртре пурăнакан чухăнпа вăл ĕмĕрне те тăванлашма килĕшес çук. «Сетнер, йытă, кĕççе пит, пуян хĕрне ан хапсăн!» — тет Михетерĕн карчăкĕ те.

Хулапа чукун çул тавраш ĕнчен инçетре, вăрман варринче пытанса ларакан чăваш ялĕ тулашри тĕнчепе пит вăр-вар хутшăнни сисĕнмест пулин те, Михетер Силпире анчах мар, таврари ялсенче те хăй чапне сарнă. Ял пуянĕн «çурчĕ хула пек, кĕрсен витĕр тухма çук».

Хуралтисен тăррине
Чăх-чĕп вĕçсе çитме çук,
Картиш тулли япала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.
Урхамах пек лашисем
Утă-сĕлĕ çиеççĕ,
Унăн выльăх-чĕрлĕхсем
Пичĕке пек çӳреççĕ.

Тивĕçлипех мухтанать иккен Михетер хăй пуянлăхĕпе. Çĕрме пуян шухăшĕпе, мул пулсан, пурте пулать, кун пирки унра иккĕленӳ пулма пултараймасть. Поэмăра çакă паллă мар, ашшĕ-амăшĕсенченех илсе юлнă-ши Михетер пуянлăхне е хăй вăйĕпе пухнă-ши? Хăй те ĕçчен вăл, чăнах та, куна туй кӳмине хăех

юсани те çирĕплетсе парать. Анчах та çичĕ тарçă-тĕрçĕ те тытать ĕнтĕ Михетер кил-çуртĕнче, çынсен тарĕпе те хушсах пырать вăл пуянлăхне. Епле пулсан та, Михетер укçа-тенкĕпе мул вăйне шанать тата çак шанчăка мĕн виличченех упрать. Мул çумне мул хушас шухăшпа Михетер пĕртен-пĕр хĕрне пуян та ватă Тăхтамана каччă пама çураçса хурать. Хушăлкари çак пуянпа мăшăрлансан хĕрĕ те телейлĕ пуласса шанать Михетер. Çывхарса килекен туя ял-йышсем те тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:

Икĕ пуян пĕрлешсен,
Шеп те пулĕ туй! — теççĕ.

Анчах Нарспин чун юратнă савнийĕ Сетнер пур-çке. Савнă çынпа пĕрлешсе, телейлĕ пурнăç тума ĕмĕтленнĕччĕ вăл. Чăнах та, ашшĕ Нарспие юратать ĕнтĕ, уншăн тем тума та хатĕр. Тем тĕрлĕ илемлĕ çипуç та тата ытти те çителĕклех Нарспин. Пăхса тăранаймасть ашшĕ куç пек тулли хĕрĕ çине. Апла пулин те, пĕр япалана çеç асра тытмасть Михетер: Нарспин, тулаш илемĕсĕр пуçне, ирĕке ăнтăлакан чунĕ те пур-мĕн. Паллах, каярахпа Нарспи Тăхтаманăн мулне хирĕç хăйĕн пĕртен-пĕр хĕç-пăшалне — чун пуянлăхне сулмаклăн та мăнаçлăн кăларса тăратсан, нумайăшĕ асăрхĕç-ха çак херте ирĕклĕх кĕрешӳçин чĕри тапнине. Халлĕхе Нарспи хăй Сетнере юратни çинчен те ашшĕне пĕлтерме хăяймасть. Çук, пĕртте витерессĕн туйăнмасть ашшĕн чĕрине Нарспи ӳкĕтлевĕ. Кăшт та пулин тăхтама çеç ыйтать Нарспи ашшĕ-амăшне, анчах та ӳкĕтлени кăлăхах.

Атте-анне ӳстерчĕ,
Хĕрне итлес темерĕ,
Каччи пуян тенипе
Хĕрин чунне пĕлмерĕ.

Ашшĕ-амăшĕ итлемерĕ пулсан, савнă Сетнерĕ пулăшĕ-ши Нарспие çичĕ ют хапсăнăвне сирме? Акă ĕнтĕ паян каçпа Нарспи туйĕ лармалла.

Тăшман ытла хаяр, тет,
Епле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта каяс, мĕн тăвас?

Сетнер те нимех те тума пултараяс çук кунта. Тăшмана пĕтерме икĕ вăйлă алли пур, анчах пурпĕр «унтан усал тĕнче пур», тет вăл. Усал тĕнче — мул тĕнчи ĕнтĕ вăл, Михетерпе Тăхтаман пек пусмăрçăсене хӳтĕлекен тĕнче. Апла пулсан, ăна хирĕç тăни усăсăр, ку — Донкихотла хăтланни пулĕччĕ. Çапах та Нарспипе Сетнер çак танмар кĕрешĕве паттăррăн çĕкленеççĕ. Вĕсен хĕç-пăшалĕ мулпа укçа-тенкĕ мар, йăпăлтатса юрама пĕлни те çук икĕ çамрăкăн. Чун пуянлăхĕ, кăвар пек вĕри юрату, çынлăх, этем чысĕпе тивĕçĕ — акă епле хăватлă хĕç-пăшал Нарспипе Сетнер аллинче. Михетерпе Тăхтаман йăнăшнă

иккен: вĕсен çаксене нимле мулпа та сутăн илме е çĕнтерме çук.

Поэмăн конфликчĕ хĕрсе пынăçемĕн сăпайлă та лăпкă Нарспире тĕлĕнмелле вăй-хăват, иксĕлми хевте тапса тăни палăрма пуçлать. Акă юлашки каç Нарспипе Сетнер вăййа тухнă, савнине юта илсе кайиччен вĕсем пĕр-пĕрне курса юласшăн.

Сетнер тăрать çавăнтах,
Пуçне усса хуйхăрса.
Сарă хĕрĕн куçĕнчен
Анать куççулĕ юхса.

Вăйă салансан, Нарспипе Сетнер иккĕш пĕрлех каяççĕ. Тепĕр кунне ирхине Силпире хыпар сарăлать: Нарспи çĕрле Сетнерпе таçта тарса кайнă иккен. Паллах, инçех тарайман ĕнтĕ вĕсем, çывăхри вăрман ытамĕнче пытаннă икĕ çамрăк вăхăтлăха. Часах вĕсене «маттур шăпăрçăпа» «икĕ пуса каччи» тытса килеççĕ.

Ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕнчен тухайманни, ваттисене хисеплени Нарспие тăлласа тăратчĕ пулсан, халь хĕр ăнланчĕ ĕнтĕ вĕсен юратăвĕ мĕне тăнине.

Эй, аннеçĕм, аннеçĕм,
Мана çӳçрен ан сĕтĕр,
Мана апла вĕрентсе,
Манран ырă ан кĕтĕр.

Этем выльăх мар-çке-ха, ун чысне сутăн илеймĕн — акă мĕн пирки хыттăн асăрхаттарать Нарспи хăй амăшне. Сетнер те урса кайнă Михетере: «Эсĕ, мана хĕнесе, кĕлрен вутă тăвас çук!» — тет. Çук, ваттисен чунĕ хытнă-мĕн, вĕсем икĕ çамрăкăн кăмăлне ăнланаймаççĕ, ăнланасшăн та мар. Апла пулсан, вĕсене ӳкĕтлени усăсăр, вĕсемпе хăюллăн кĕрешмелле. Халь ĕнтĕ хăйне ирĕксĕрех качча пачĕç пулин те, Нарспи татах та хăрушшăнрах асăрхаттарать:

Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн çирĕр хĕр пуçне,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре
Çичĕ ютăн аллине?
Эй, каччăмçăм, Тăхтаман,
Манпа ырă курас çук,
Эпĕ, чунăм пĕтсен те,
Санпа пĕрле пулас çук!

Кунта ĕнтĕ халь ашшĕ-амăш сăмахĕнчен иртеймен йăваш хĕртен ним те юлман, Нарспи вĕсене халь айăплать («мĕншен çирĕр хĕр пуçне?»). Автор та хăй шухăшне пĕтĕмлетсе çапла калать:

Нарспи кайрĕ ют çĕре,
Сетнер юлчĕ кăлăхах.
Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех.
Тăван çирĕ тăванах.

«Тăван çирĕ тăванах» тенĕ шухăша К. Иванов «Тимĕр тылă» балладăпа «Шуйттан чури» трагедире те уççăнах илтĕнмелле каланăччĕ. Автор мĕншĕн çак шухăша çине-çинех пусăм туса калани паллă ĕнтĕ: çынлăх, тăванлăх, туслăх тенисем нухратпа мулран хаклăрах тăраççĕ. Поэта чи малтан мораль ыйтăвĕсем канăç памаççĕ.

Тăхтаманпа пурпĕр пурăнмастăп тесе, Нарспи ахаль каламан-мĕн: вăл вата упăшки асаплантарнине чăтса пурăниччен хам вилем пĕреххут тесе шухăшлать. Анчах çавăнтах вăл шухăша пăрахăçлать:

Çук, пуçăма çииччен
Тăшманăма пĕтерем,
Асапланса тӳсиччен
Тăхтамана... вĕлерем.

Акă тинех ĕнтĕ Нарспи тискер тăшманĕнчен хăтăлчĕ, вăл савнă Сетнерĕн хура пӳртне тарса çитрĕ. Икĕ çывăх чун шăкăлтатса калаçаççĕ, кунтах Сетнер амăшĕ, хĕртсурт пек шăпскер, вĕсем калаçнине итлесе ларать. Çав хушăра Михетерпе карчăкĕ алăкран килсе кĕреççĕ.

Поэмăн сюжетне çакăнпа вĕçлеме те май килнĕ пулнă-и, тен? Телейлĕ вĕçленекен пĕр-пĕр романа аса илтернĕ пулĕччĕ вăл. Чăнах та, Нарспи, тем тĕрлĕ хĕн-хурпа асап тӳссе, хаяр тăшманне пĕтерсе, савнипе пĕрлешрĕ ĕнтĕ. Пурăнĕç-и, тен, икĕ çамрăк хуллен хура пӳртре те. Сетнерĕн алли мĕн ачаранпах ĕçпе пиçнĕ, Нарспи те, пуян çын хĕрĕ пулсан та, ĕçрен пĕртте ютшăнмасть. Сак тулли ача-пăча çуратса ӳстерсен, ялти нумай çынран кая пурăнмĕччĕç вĕсем. Тен, ашшĕ-амăшĕ те, ним тума аптраса, Нарспие чухăн кĕрӳшпе пехиллĕç, ун пекки час-часах пулкаланă чăвашра. Анчах та автор çакна лайăх ăнланнă: сюжет аталанăвне малалла çак йĕрпе яни типлă характерсен логикине пăсни пулĕччĕ. Хивре сюжет малалла та трагедилле характерсен еккипех аталанать.

Лăпланчĕç-ши ĕнтĕ халь Михетерпе карчăкĕ, килĕшрĕç-ши вĕсем хăйсен телейсĕр шăпипе? Çук, вĕсем Нарспие хăйсемпе пĕрле килне илсе каяс шухăшпа килнĕ иккен. Михетерпе карчăкĕ хĕрĕ ăса кĕнĕ пуль тесе шутланăччĕ, апла мар иккен. Михетер халь те Нарспи чунне ăнланмасть-ха:

Мĕн çитмерĕ-ши сана,
Мĕн çитмерĕ тĕнчере?
Мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан,
Юрататăн Сетнере?
Пуян хĕрĕ пуçупа
Мĕншĕн çапла хăтлантăн?
Ĕмĕр курман намăса
Ват пуçăма кăтартрăн?

Нарспи те хăй шухăшне пĕртте улăштарман-мĕн: «Пуянлăхра анчах мар, ыр курасси çыннинче»,— тет вăл ашшĕне. Вĕсем

хушшинчи хĕрӳ конфликт ним чухлĕ те «сивĕнмен», сĕвĕрĕлмен иккен, Михетерпе карчăкĕ яланхи пекех укçа вăйне шанаççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, мулпа ял çыннисен çăварне хуплама та пулать. «Тепрер каччă тупăпăр яту çĕрсех кайиччен»,— теççĕ вĕсем хĕрне. Анчах Нарспи: Сетнере кĕрӳ тума килĕшмесен, унпа пехиллемесен, «эпĕ сирĕн хĕрĕр мар», тет. Ку ĕнтĕ Нарспин юлашки татăклă сăмахĕ. Çук, Михетерпе карчăкĕ вилсен те Сетнере кĕрӳ тума килĕшес çук. Вĕсем хĕрне ылханса тухса каяççĕ:

*Пĕтĕр, типĕр çакăнта,*
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

Поэмăн трагедилле вĕçĕ вулаканшăн кĕтмен-туман çĕртен çаврăнса тухнă япала мар. Автор темиçе тĕлте те тӳррĕнех каланăччĕ: «Ашшĕ-амăш ухмаххи çирĕ хĕрĕн пуçне». Нарспипе Сетнер мĕн-мĕн тӳссе ирттермерĕç-ши, хăйсен таса юратăвĕпе этем чысне хӳтĕлесе? Вĕсен пуçĕ çинче, тискер саманапа мулсăр пуçне, кивелнĕ, патриархалла йăла-йĕрке тата ял çыннисен сăмахĕ те шеллевсĕр пусарса тăчĕç. Йывăр, тӳсме çук йывăр пулчĕ вĕсене çак тан мар кĕрешӳре этем чысне упраса хăварма. Малта пыраканнисене яланах йывăр, анчах вĕсем хыççăн ыттисем пиншерĕн çĕкленеççĕ. Нарспипе Сетнер вилеççĕ. Çапах та Сетнер ăнсăртран вилмест-ши? Çук, кунта герой мĕнле вилни тĕпре тăмасть, вăл урăхла та куç хупма пултарĕччĕ. Поэмăри тĕп хирĕçӳлĕхĕн тĕввине салтма урăхла май килмен: Сетнерĕн вилмеллех пулнă. Ку паллă пулсассăн, Михетерпе карчăккин вилĕмне мĕнле ăнланмалла-ха? Автор шухăшĕ кунта та яр уççăнах курăнса тăрать: мул, укçа-тенкĕ, мăскал çине хурса виççсен, çынлăхран, чун пуянлăхĕнчен пиншер хут çăмăл таяççĕ. Акă ĕнер çеç Михетер хăйĕн мулĕпе мухтанатчĕ, ун кил-çуртне пырса кĕме те шикленмеллеччĕ. Паян вăл хăйĕн хăрушă шăплăхĕпе чуна çӳçентерет. Кама кирлĕ ĕнтĕ халь ун пуянлăхĕ, чапĕ? Мĕскер-ши ку, шăпа-ши е турă çырни-ши?

Нарспи çакăнса вилнинче те ăнланмалли марри ним те çук. Ашшĕ-амăшĕн кермен пек кил-çурчĕпе пуянлăхĕ Нарспие ним тума кирлĕ мар ĕнтĕ халь. Чăн тăванла пĕртен-пĕр çывăх чун çут тĕнчерен кайрĕ пулсан, Нарспишĕн те пурнăç текех шел мар. Аса илер-ха «Тăлăх арăм» балладăри кĕçĕн кин шăпине, вăл та савнă мăшăрĕпе пĕрлех (унăн виçĕ çӳç пĕрчипе) çакăнса вилнĕччĕ. Никампа та мар, Сетнерпе пĕрлешсе çеç хăй телейне тупма ĕмĕтленнĕччĕ Нарспи. Анчах тем чул кĕрешсен те, пӳрмен телей Нарспипе Сетнершĕн пулмарĕ.

Турă çырни ахăрах,
Çапла-тăр çав самани,

тет автор. К. Иванов турра ĕненменни паллă, куна поэта аса илекенсем те çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, К. Ивановăн аслă

йămăкĕ кун пирки çапла аса илсе çырать: «Шкулта вĕренсе пурăннă чухне пичче пĕртте чиркĕве кайма юратмастчĕ»[22]. Поэта аса илекенсенчен нумайăшĕ çак шухăшах калаççĕ. Апла пулсан, мĕнле ăнланмалла-ха поэмăра çине-çинех турă çырни тенине? Пĕр иккĕленмесĕрех çапла калама пулать: автор авалтан халăх турă çырнине ĕненни пирки калать. Михетершĕн урăх турă та пур: ахальтен мар «Нарспире» поэт «укçапала эрехех çынна ăсран кăларать» тет. Çав турра хирĕç, ăна чунтан сивлесе паттăррăн çĕкленеççĕ те ĕнтĕ Нарспипе Сетнер.

Социалла танмарлăха хăюллăн питлекен поэмăн тĕп конфликчĕ чи малтанах мораль ыйтăвĕпе çыхăннă терĕмĕр. Паллă ĕнтĕ, тĕпри хирĕçӳлĕх витĕр пăхсан çеç произведенири геройсен характерĕн хăйевĕрлĕхне, авторăн идейăлла концепцине, поэтика хатĕрĕсен уйрăмлăхĕпе тупсăмне тарăнрах ăнланса илме май килет. Поэмăра сăнласа кăтартнă геройсем — Нарспи, Сетнерпе унăн амăшĕ, Михетерпе карчăкĕ, Тăхтаманпа ыттисем — пурте вĕсем хире-хирĕçле икĕ класс представителĕсем. Çавăнпа та вĕсем хушшинчи хирĕçӳлĕхре социалла-класла интерес уççăнах курăнать. Çакна асра тытса тăнипе пĕрлех, тепĕр япалана та манма юрамасть. Нарспи — пуян Михетер хĕрĕ-çке-ха, апла пулин те вăл хăй ăраскалсăрлăхĕн тĕп сăлтавне шăпах ашшĕ-амăшĕн мулĕнче курать. Урăхла каласан, Нарспи, этем тивĕçне хӳтĕлесе, мула хирĕç çĕкленет, хăйне мĕн çуралнăранпах пуянсен сийĕпе çыхăнтарса тăракан класла тымарсене пĕр хĕрхенӳсĕр кăклать. Вăл пĕр класран уйрăлса тепĕр класпа (чухăнсемпе) пĕрлешнине поэмăра автор вĕçне çитиех кăтартмасть пулин те, вулакан иккĕленмест: Нарспи чăваш халăх идеалне, унăн хуйхи-суйхипе савăнăçне туллин уçса панă сăнар. Халăх ĕмĕрсем тăршшĕпех ирĕк пурнăçа ĕмĕтленни, танмарлăха йышăнманни Нарспи сасси урлă пĕрремĕш хут чан сасси пек янраса кайнă.

Паллах, паянхи вулакансемшĕн автор идеалĕ — пурнăçа кĕнĕ япала темелле, анчах та Нарспипе Сетнер кĕрешĕве çĕкленнĕ вăхăта шута илсен, вăл мĕнлерех курăнать-ха? Лару-тăрусемпе характерсен типлăхĕ енчен пăхсан, мĕн калама пулать-ха автор идеалĕ пирки? Питĕ вăраххăн та хăюсăррăн уçăлса пырать-ха халăх куçĕ: Нарспипе Сетнерĕн йывăр хуйхипе асаплă пурнăçне куллен кунах курса тăракансем хушшинче хута кĕрес е хӳтĕлес текенсем курăнмаççĕ. Ял çыннисенчен чи хăюллăраххисем те, икĕ паттăра хĕрхенсе ассăн сывланисĕр пуçне, нимех те тăваймаççĕ-ха. Çапла вара, геройсене халăхпа çыхăнтарса тăракан тĕвĕсем ытла та хавшак пулни кĕретех курăнать. Шăпах йĕритавралăхран пулăшу кĕтменнипе, пĕчченлĕхпе, пăлхавлă чунĕсемпе романтиксен геройĕсене (сăмахран, М. Ю. Лермонтовăнне) аса илтермеççĕ-и-ха пире Нарспипе Сетнер? Халăх ĕмĕчĕн сăпкинче çитĕннĕ Нарспи сăнарне ӳкернĕ чух, паллах, уйрăмах илемлĕ сăрсем кирлĕ пулнă. Ĕçченлĕх, ăшă кăмăл, туйăм, чун тасалăхĕ, ĕмĕт вĕçевĕ, çепĕç те килĕшӳллĕ хускану — акă мĕнпе

уйрӑлса тӑрать Нарспи ытти геройсенчен. Ҫамрӑк пикен хӑй пекех ҫамрӑк та сӑпай савнийӗ Сетнер пур.

«Нарспин» тӗп конфликчӗ — укҫапа ҫынлӑх, чун-чӗре чухӑнлӑхӗпе пуянлӑхӗ хушшинчи хирӗҫӳлӗх — поэмӑн пӗтӗм ӑш-чикне икӗ пая уйӑрать. Ҫак икӗ ен хушшинче самантлӑха та чарӑнми кӗрешӳ пырать. Контраст майӗ геройсен характерӗпе сӑн-питне тата шалти тӗнчипе интересӗсенчен пуҫласа сӑнарсене калӑпланӑ чух усӑ курнӑ мелсем таранах витерет. Сӑмахран, Нарспипе Сетнер сӑнӗ-пичӗпе тата чунӗпе мӗн чухлӗ хитререх, вӗсен хаяр тӑшманӗ Тӑхтаман ҫавӑн чухлӗ нӗрсӗртерех. Михетерпе карчӑкӗ мула мӗн чухлӗ кӑмӑлласҫӗ, икӗ ҫамрӑк унран ҫавӑн чухлӗ пӑрӑнасҫӗ.

«Нарспи» поэмӑн поэтики пуян та хӑйне евӗрлӗ. Чи малтанах К. Ивановӑн композици йӗркелес ӑсталӑхне палӑртмалла. Драмӑлла ӗҫсемпе геройсен кун-ҫулне тарӑн ҫутатса памашкӑн поэмӑн уйрӑм сыпӑкӗсене пӗлсе вырнаҫтарни нумай пулӑшать. Тӗслӗхрен, «Юмӑҫ патӗнче» ятлӑ сыпӑках илер. Чун савнине ҫичӗ ютри тӑшман илсе кайма хатӗрленнине пӗлсе тӑракан Сетнер йывӑр хуйхӑпа асапланать. Унӑн амӑшӗ вара, ывӑлне «усал-тӗсел ернӗ» пуль тесе, юмӑҫ патне уттарать. Юмӑҫ чӑваш ялӗнче сӗм авалтанпах тӗшмӗшлӗх тытӑмӗ, ӗҫсыннисенеултавпа пусмӑрласа пурӑнакан этем шутланни вулаканшӑн паллӑ. Апла пулин те, автор тӗллевне поэмӑра анлӑрах, тарӑнрах ӑнланас пулать. Асӑннӑ сыпӑкӑн поэмӑри тепӗр пӗлтерӗшӗ пысӑк. Ку вӑл — поэмӑн психологилле хӗрӳлӗхне вӑйлатасси, кунта вара сӑмах поэтика мелӗсем пирки пырать. Тимлӗрех вуласан, ҫакна асӑрхама йывӑрах мар. Акӑ Сетнер амӑшӗ старике, «мӑшӑр чӗлха, пӗр кӗпе» пама пулса, ӳкӗте кӗртет. Лешӗ хатӗрхӗтӗрсене илет те юмӑҫ пӑхма пикенет.

Ҫине кӗрӗк тӑхӑнса,
Ҫӗлӗк тытрӗ хул айне;
Ури айне шӑрт хурса,
Укҫа хучӗ хӑй умне;
Унтан шурӑ сухалне,
Кӑвак ҫӳҫне якатса,
Укҫа ҫине суккӑрскер
Пӑхрӗ куҫне чакӑртса.

Старикӗн куҫ пӑваканӑн пек хӑтланкаларӑшӗсене пӑхса, карчӑк ни вилӗ, ни чӗрӗ ларать ӗнтӗ. Укҫа ҫине куҫне чакӑртса пӑхакан суккӑр старик «Тимӗр тылӑри» асамлӑ вӑй хуҫине суккӑр тухатмӑша аса илтермест-и-ха пире? Ҫук, кулса, шӳтлесе калаҫни илтӗнмест авторӑн ҫак ӳкерчӗке кӑтартнӑ чух. Пӑхар-ха, акӑ мӗнле курӑнасҫӗ старике Сетнерӗн ҫывхарса килекен кунӗсем:

Ҫамки шӑтӑк — хупӑнмӗ,
Чӗри татӑк — сыпӑнмӗ,
Пӳлӗх турӑ пӳрнинчен
Нимӗнпе те иртеймӗ.

«Хытнă çёртен ирёлсе, çунса кайё çемçе чун»,— тет вăл юлашкинчен. Кунта вулакан иккёленмест ёнтё: старик Сетнер пуçё çине пысăк инкек йăтăнса анасса систерет. Сетнер амăшне илес пулсан, вăл ёнтё, ку сăмахсене илтсен, тăнне те çухатать. Урлă-пирлё тайăлса тăракан карчăка старик акă мёнле лăплантарма пăхать:

Ан йёр, кинём, пўлёхçе
Епле хирёç пымалла.

Çын тухатнине е усал-тёселе сирме пулать, анчах мёнле-ха турă çырнине хирёç пырăн, тесшён юмăç. Епле пулсассăн та юмăç хăй ёçне турё: малтан иккёленсе çеç пынă Сетнер амăшне ёнентерсех ячё. Çитменнине старик хăй сăмахне хăй те чăна хывать:

Мёнле вара ку паян?
Чёре чăнах пёлчё-шим?
Суйса парас тенёччё —
Ак тамаша! Тёрёс-шим?

Çине-çинех калать старик хăй сăмахне. Анчах епле инкек кётет-ши Сетнере? Юмăç сăмахё чăна килет: «ак тамаша! тёрёс-шим?» текен сăмахсем хыççăн «Тарни» сыпăк пуçланать. Малалла мён пулса иртессе вулакан пёлет. Сетнерён инкекёсем пёрин хыççăн тепри тухса пыраççё. Енчен те юмăç калани пурнăçланман пулсан, унăн тёшмёшлёхёпе суялăхё татах та уççăнрах курăнса кайнă пулёччёç. Хăй те вăл: «Ку таранччен яланах суя сăмах каласа улталаса яраттăм»,— тет. Хальхинче юмăç инкеке систерет, Сетнер амăшне çеç мар, вулакана та. Поэмăра юмăç пăхни илемлёх мелёпе, поэтикăпа çыхăннă, вăл произведенин трагедилле шухăшне тарăнлатать.

Авторпа унăн геройёсем çутçанталăкри кашни сасса питех те çепёççисенчен пуçласа хаяррисем таранах çав тери сисёмлё туяççё. Çутçанталăк та геройсен кăмăл-туйăмёсемпе пёрле çав тери сисёмлён улшăнса пырать. Сăмахран, тин çеç хăйён усал тăшманне тёп тунă Нарспи вăрманпа пырать. Армак-чармак йывăççем пуçёсене суллаççё, Нарспин çулне пўлеççё, йывăççем хушшинче вылякан арçурисем ун еннелле аллисене тăсаççё. Çутçанталăкри хăрушлăх Нарспие çилленсе айăпланăн туйăнать. Çав хушăрах епле кăмăллăн ачашлать валак патёнче тёл пулнă икё савние çутçанталăк!

К. Иванов поэмăра халăх сăмахлăхёнче çирёпленнё эпитетсемпе, танлаштарусемпе усă курать. Чăнлăхпа илеме, ырăпа усала поэт халăх идеалёпе шайлаштарса хаклать. Çавăнпа та хăйён поэтикине вăл тăван чёлхепе сăмахлăхăн сёткенёпе пуянлатнă. Сăмахран, автор Нарспин чёрё сăнарне çутă та илемлё сăрсемпе ўкерет. Ана вăл хирти сарă чечекпе танлаштарать. Халăх юррисенче анлă сарăлнă мăшăрçумлăх (параллеллёх) мелё кунта питё те вырăнлă:

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет,
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

«Сарă хĕр» сыпăкра Нарспин сăн-сăпачĕ туллин куç умне тухать: хĕрĕн «икĕ куçĕ хуп-хура, икĕ хура шăрçа пек». Анчах та «сарă» тени кунта хитре, ытармалла мар тенине пĕлтерет. Чăваш идеалĕ ку. Сасси хĕрĕн «кайăк сасси евĕрлĕ», вăйă-кулă картинче ун çине кашни ăмсанса пăхать. Поэт олицетворенисем тума ăста: хĕл хăйĕн ыйхинчен вăранать, сивĕ куççулĕпе йĕрет, хуйхăрать; хĕвел тĕрĕ тĕрлет, ватă йăмра хăй сăнне шывра пăхса савăнать т. ыт. те.

Ытарлă сăнарлăх (метафора) мелĕ те поэт каланинче часчас тĕл пулать: «сӳс хӳреллĕ хурçă йытă пĕр кĕрет те пĕр тухать», «лаши сикрĕ, ыткăнчĕ, вĕçсе кайрĕ килнелле» т. ыт. те. Поэт чĕлхи эпитетсемпе те пуян: *ырă* çуркунне, *хаяр* хĕл, *чипер* ача, *сарă* каччă, *пĕчĕк* пӳрт, *вĕри* юнлă чĕре т. ыт. те. Поэта чĕрĕ ӳкерчĕксем тума витĕмлĕ пайрăмсемпе (детальсемпе) усă курма пĕлни те пулăшать. Илемлĕ пайрăм психологизма тарăнлатма май парать. Автор тепĕр чух пĕр йĕрпех уçăмлă ӳкерчĕк тăвать: чăтлăхра чăйăлтатакан *хура кайăк, кушак пит çунин* ытарлăхĕ, хир варринчи чăвашăн *улача кĕпи,* анкартинче *ухлатакан тăмана* т. ыт. те.

Паллах, К. Иванов фольклорти илемлĕх майĕ-мелĕсемпе çеç çырлахман, вăл вырăс классикине тарăн тĕпченĕ. Сăмахран, «Нарспи» поэмăн сăвă çаврăмне йĕркеленĕ чух Пушкинăн «Онегин» строфинчен тĕслĕх илни тӳрех курăнать. Иванов пуçласа усă курнă çирĕмшер йĕркеллĕ çавра чăваш поэзийĕн мал утăмĕ пулнă. Кунсăр пуçне, поэма авторĕ рифма ăсталамалли çĕнĕ çул-йĕрсем уçать. Çавна пула вăл сăвă кĕвĕлĕхне, ун янравлăхне вăйлатать.

Пĕрре пăхсан, К. Иванов пултарулăхĕнче чăваш халăхĕн авалхи пурнăçне çырса кăтартнăн туйăнать. Балладăсенче те, юмахла хайлавсенче те иртнĕ вăхăт паллисем куç умне ытларах тухаççĕ. «Нарспи» поэмăра та çавах—патриархалла пурнăç йĕркисем ним чухлĕ те улшăнман темелле. Апла пулин те, самана варкăшĕ, унăн тăвăлĕ чăваш пурнăçне часах тĕпрен çĕнетессине, çав вăхăт инçе маррине тарăннăн палăртать поэт. Нарспин телейсĕр шăпи çеç мар, унăн паттăрла кĕрешĕвĕ те çынсен чунне, ăс-кăмăлне хускатма тивĕçлĕ. Нарспи — çĕнĕ самана çынни, çĕнĕ вăхăт ӳкерчĕкĕ сăнар.

Поэт хăй вăхăтĕнче самана пирки тӳреммĕн шухăша кайса, ун паллисемпе пулăмĕсене реализмла типласа ӳкерме тăрăшнине эпир унăн «Хальхи самана» поэминче куратпăр. Пĕтĕм чăваш культуришĕн калама çук пысăк событие — Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕ хĕрĕх çул тултарнă тĕле халалланă ăна автор.

К. Ивановпа пĕр вăхăтрах, чăваш ăсçутавçин прометейла сăнарне, унăн ĕçĕпе ятне чысласа, Н. Шупуççынни те «Хĕрĕх

çул хушши» ятлă сăвă çырнă. И. Яковлев халăх урапине кӳлĕнмĕренпе чăваш пуçĕ тĕлĕнче «тĕттĕм, тĕтре сирĕлет — çутă уçăлать», тет поэт. Шупуççыннишĕн халăх çутталла туртăнма пуçлани чăвашсем историн малаш çулĕпе тăн-тăннăн утма пикеннине пĕлтерет. «Ĕнер пулнă ĕçсем пек...» сăввинче вăл чăваш культурин тӳпинче çăлтăр йăлкăшма пуçланине савăнса асилет.

Анчах çăлтăр, çитĕнсе
Уйăх пек пулсан,
Нумай илчĕ сĕлехе
Вĕçен тăшмантан.

Унăн вăйлă çуттине
Сӳнтерес тесе,
Тумлантарать ун çине
Тăшман сĕлехе.

Анчах çăлтăр яп-яка,
Сĕлехе тытмасть,
Çĕрĕн-кунĕн çутатма
Çапах чарăнмасть...

Вăраннă халăхăн çамрăк ывăлĕ-хĕрĕсем малаллах талпăнаççĕ, тет автор. Паллах, ку сăвăра поэт И. Яковлев чĕртнĕ культура вучахĕ çинчен калать. Шупуççыннине çутăлăх ĕçĕ канăç паманни поэтăн ытти произведенийĕсенче те лайăх курăнать. Сĕм тĕттĕмлĕхре йăлкăшса çунакан хунар вăл — «çырнă хут», тет поэт «Хунар çути» сăввинче. Анчах та çак хунара сӳнтерсе лартас текен хура вăйсем те сахал мар.

Общество прогресне çутăлăх ĕçĕпе çыхăнтарни, этеме пĕлӳне воспитани парса, ун ăс-тăнне «уçса» пурнăçри тĕрĕсмарлăхна тĕрлĕрен ырă мара пĕтерме май килессе шанни ытти çыравçăсен пултарулăхĕнче те уççăнах курăнать. Сăмахран, Г. Кореньков, пĕтĕм пурнăçне халăха вĕрентес ĕçе панă поэт, «чăваш çынни» çутта тухасса, çав вăхăт çывхарасса ĕмĕтленет:

Килтĕрччĕ хуть пĕр этем
Çӳллĕ çутă çуртипе,—
Палăрĕччĕç алăксем
Унăн лăпкă çутипе.

(«Мĕншĕн пирĕн маларах...»,
1907)

Яккупа Хветĕр Турхансем, Г. Комиссаровпа ытти хăшпĕр писательсем те социалла танмарлăх танатинчен çăлăнса тухмалли çула çутăлăхра шыраççĕ. Анчах та хăшĕсем демократилле çутăлăхпа тĕн «çутин» антагонизмла хирĕçӳлĕхне уяймаççĕ-ха.

Революци вăй илсе çитнĕ вăхăтра чăваш çырулăхĕнчи революцилле-чĕнӳллĕ туртăм тĕп туртăм пулса тăнă вăхăтрах çыравçăсен пысăк ушкăнĕ çутăлăхра çăлăнăç шырать. Теприсем

вара социалла ыйтусемпе тӳррӗн ҫыхӑнман пулӑмсем тавра шухӑш ҫавӑраҫҫӗ: юрату лирикине аталантараҫҫӗ, философилле ыйтусене хускатаҫҫӗ. Литература тӗрлӗ туртӑмсемпе пуянланни куҫкӗрет. Ҫав туртӑмсенчен кашниех хӑйне тивӗҫлӗ историлле пӗлтерӗшлӗ. Вӗсем пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑннӑ. Сӑмахран, ҫутӑлӑх туртӑмӗ ҫӗнӗ тапхӑрти ҫырулӑхра вӑйлӑран та вӑйлӑрах тымар ярса, сарӑлса пырать. Тимлӗрех сӑнасан, ҫутӑлӑх идейисем К. Ивановӑн романтизмла произведенийӗсене те пысӑк витӗм кӳнине асӑрхама пулать. Поэтӑн кашни хайлавӗ ырӑпа усал кӗрешӗвне сӑнласа кӑтартать. Сӑвӑ-поэмӑсен шалти тытӑмӗ час-часах трагедилле ӗҫ-пулӑмсенчен йӗркеленет. Поэт пултарулӑхне тӗплӗ тишкерсен, ҫакна асӑрхамасӑр иртме ҫук.

Яковлев шкулӗнчи поэтсем ҫеҫ мар, Хусанта йӗркеленнӗ литература шкулӗн чи хастар ҫыравҫисем те ҫутӑлӑх ыйтӑвӗсен пысӑк пӗлтерӗшне ӑнланаҫҫӗ. Тайӑр Тимккин пултарулӑхӗнче халӑха ҫутталла йыхӑракан, ӑна тӗттӗмлӗхрен ертсе тухас тесе тӑрӑшакансем — чӑн-чӑн паттӑрсемпе кӗрешӳҫӗсем. «Хӑшӗ ҫутӑра ҫӳресен те, ыттисене ҫутӑ курма вӗрентиччен аллисене туя тыттараҫҫӗ»,— тесе тарӑхать «Ҫутта тухасчӗ» новеллӑри герой. Халӑха вӗренмелли майсем туса памалла, тӗнче культурин пуянлӑхӗ упранакан ҫӳпҫе хупӑлчи чӑвашсемшӗн те уҫӑ пултӑр, чӑваш чӗлхи ӑслӑлӑх чӗлхи, вӑйлӑ аталаннӑ ҫырулӑх чӗлхи пултӑр — акӑ епле пысӑк ыйтусене хускатаҫҫӗ ҫыравҫӑсем пултарулӑхра.

Тайӑр Тимккипе М. Акимов — идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫеҫ мар, художествӑлла шухӑшлавра та пысӑк утӑм тунӑ ҫыравҫӑсем — хӑйсен пултарулӑхӗн революцилле туртӑмӗпе социалла ҫивӗчлӗхне аталантарсах пыраҫҫӗ. Кунпа пӗрлех вӗсем ҫутӑлӑх идейисене халӑхра сарма тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсен пултарулӑхӗнче ҫутӑлӑх реализмӗн паллисем уҫҫӑнах сисӗнеҫҫӗ. Кунта чи малтан самана паллисене пӗтӗҫтерсе сӑнарланнӑ герой ҫинчен сӑмах пырать. Халӑха ҫутта кӑларасси саманан тӗп ыйтӑвӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Герой характерӗ, унӑн ӗмӗчӗсемпе шухӑшӗсем, ӗҫӗ-хӗлӗ пӗтӗмпех хӑй умне автор лартнӑ ҫав тӗп тӗллевпе ҫыхӑнаҫҫӗ. Илемлӗх мелӗсемпе поэтикӑн пур енӗсем таранах витереҫҫӗ ҫутӑлӑх идейисем. Ҫакна хӑшпӗр тӗслӗхсем ҫирӗплетсе параҫҫӗ. М. Акимовӑн «Ялти пурнӑҫ» драминче ҫутӑлӑх реализмӗн тӗп паллисем яр-уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. Кунта ҫакӑн пек ыйту сиксе тухать: мӗншӗн-ха кашни хайлавӗнче тенӗ пекех уҫҫӑнах кӗрешӗве чӗнекен М. Акимов публицист ҫак драмӑра самана варкӑшӗнчен пытаннӑ, темле хӳтлӗхри лӑпкӑ та тӳлек пурнӑҫа сӑнласа кӑтартать? Ял пурнӑҫӗ те пирӗн ума пӗтӗм анлӑшӗпе мар, Хветӗр килйышӗн пурнӑҫӗ витӗр тухса тӑрать. Ҫапах та драма чылай япала пирки шухӑша ярать. Чӑн малтанах автор Хветӗр килйышӗнче ҫирӗпленнӗ йӑла-йӗркесене, ҫынсен мӗскӗнлӗхне сивлет. Ухунька пек йӑпӑлти те ултавҫӑ «пуҫлӑхсен» ӑш-чикӗпе сӑн-сӑпатне те тарӑн уҫса парать вӑл. Мӗн тумалла-ха пурнӑҫ йӗркисене ҫӗнетес тесен? Мӗнле май-

семпе усă курмалла? Паллах, М. Акимов революцилле çулйĕре пăрахăçламан. Анчах та çак йышра кĕрешĕве çĕкленме хатĕр хастар çынсене курмасть вăл. Çавăнпа та тарăхса питлет те ĕнтĕ автор этеме çынлăх картинчен кăларакан, мĕскĕнлентерекен пурнăç йĕркисене. Вĕсене улăштарсан, пăрахăçласан, çутталла, тасалăхпа типтерлĕх еннелле туртăнсан, пурнăç лайăхланасса шанать автор. Мĕншĕн тесен социалла танмарлăха сирсе ыватса ирĕклĕ пурнăç тума тытăнас тесен, тĕттĕмлĕхпе мĕскĕнлĕхе пĕтермелле. Унсăрăн революци çĕнтерессе те шанма йывăр. М. Акимов çутăлăх идейисене революцин тĕп тĕллевĕнчен пĕртте уйăрмасть. Писатель пултарулăхĕ халăхран вăй илсе тăни, вăл халăх хуйхипе пурăнни çакăнта лайăх сисĕнет. Сăнарлă та витĕмлĕ сăмахпа, çивĕччĕн питлесе е чĕнӳллĕ хавхаланупа та палăртать писатель этемĕн тӳсмелле мар йывăр пурнăç сăлтавĕсене. Çавăнта ĕнтĕ шăпах М. Акимов пултарулăхĕн тĕп хăвачĕпе туртăмĕ.

Революци тапхăрĕнчи литературăна тĕпченĕ чух унра саманан паянхи ыйтăвне тивĕçтерекен туртăма, урăхла каласан, класс кĕрешĕвне тӳреммĕн сăнласа паракан произведенисене çеç пахалани хăрахьенлĕхе сулăнтарнă пулĕччĕ.

Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш çыравçисенчен чылайăшĕн пултарулăхĕнче лирикăлла туртăм сулăмланать. Чĕмпĕрпе Хусанти литература шкулĕсем вăй илсен, лирикăлла юхăм пушшех те вăйлăрах чĕрĕлсе каять. Лирикăн тĕрлĕ тĕсĕсем К. Иванов, Н. Шупуççынни, Г. Кореньков, Г. Комиссаров, Яккупа Хветĕр Турхансен сăвви-поэмисенче сăнланаççĕ. Гражданла лирикăра та паха тĕслĕхсем çуралаççĕ. Лирикăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе формисем уйрăмах Г. Кореньков пултарулăхĕнче туллин палăраççĕ.